С(Чув)
Л93
4030-чув

ах БИБЛИОТЕКИ



1992
6

Альбина ЛЮБИМОВА

# Каях, сывӑ пул...

*Сӑвӑсем*
*Калавсем*
*Юмах*

Национальная библиотека ЧР
4-034030

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

кр
С(Чув
К 193

«ВУЧАХ» библиотеки
6 кăларăм

Альбина Любимова

# Каях, сывă пул...

САВĂСЕМ
КАЛАВСЕМ
ЮМАХ

Шупашкар — 1992 çул

84.06-5

ПРОВЕРЕНО
2010 29 СЕН 2017

34030-гув

Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

# Илсе кай мана тĕнче хĕрне...

## «Увези меня ты в тундру...» (Юрăран.)

* * *

Илсе кай мана тĕнче хĕрне.
Унта,
Тĕнче хĕрринче,
Ир-ирех
Курас килет кунпа çĕр тĕлпулăвне.

Илсе кай мана тĕнче хĕрне.
Унта,
Тĕнче хĕрринче,
Кăнтăр кунĕнче
Итлес килет хĕвелпе уйăх калаçăвне.

Илсе кай мана тĕнче хĕрне.
Унта,
Тĕнче хĕрринче,
Каçхи шăплăхра
Пĕлес килет çăлтăрсен вăрттăнлăхне.

Илсе кай мана тĕнче хĕрне.
Унта,
Тĕнче хĕрринче,
Çурçĕр варринче
Пĕтĕм инкек-синкеке
Чăнкă çыранран ярас килет тĕртсе.
Илсе кай мана тĕнче хĕрне.
Унта,
Тĕнче хĕрринче,
Сан çинчен манса,
Хам çинчен манса,
Пĕчĕк хĕрача пулса,
Ларас килет сулласа урасене.

Тархасшăн,
Илсе кай мана тĕнче хĕрне..,

* * *

Чун алăкне яри эп уçрăм
Сан умăнта.
Кĕтĕр, хуçа пултăр, терĕм.
Чунăм ырлăхĕпе савăнтăр, терĕм.
Чун урати умĕнчен мăнаçлăн
пăрăнса утрăн.
Иçмасса, çаврăнса та пăхмарăн.

Чун алăкĕ шалтах! хупăнчĕ.
Чунăм алăксăр тăрса юлчĕ.

Самаях çӳресен эс тĕнче касса,
Килтĕн каялла ман пата çаврăнса.
Куратăп: тустарнă пурнăç сана.
Туятăп: пусарнă мăнаçлăхна.
Уçасшăн пултăн чунăм алăкне,
Тăрăшсах шырарăн алăк хăлăпне,
Курасшăн пултăн чунăм ырлăхне.
Хуçаланасшăн пултăн рехетленсе.

Ан пĕтер эс уссăр юлашки вăйна
Пурпĕрех тупаймăн уçă алăк.
Пĕр хутланса ларнă чунăма
Тӳрлетеймĕн ĕнтĕ каялла.

* * *

Чĕнмесĕрех килтĕм сан патна.
Хам хăюллăхран хам тĕлĕнсе,
Алăка яр! уçрăм та кĕтĕм пӳлĕме.
Чĕнмесĕрех килтĕм сан патна.
Чунăм ыйтнипе, чĕрем хушнипе
Чĕнмесĕрех килтĕм сан пата.
Кунçулăма санпа çыхăнтарма,
Пурнăç сукмакĕпе юнашар утма
Чĕнмесĕрех килтĕм сан патна.
Шăпама сан аллуна пама
Чĕнмесĕрех килтĕм сан патна,
Пĕлтерсем шухăш-кăмăлна,

Каласам татăклăн сăмахна.
Чĕнмесĕрех килтĕм сан патна.
Хам хăюллăхран хам тĕлĕнсе,
Алăка яр! уçрăм та кĕтĕм пӳлĕме...

* * *

Эсĕ — кĕсле, эпĕ хĕлĕх пулам-и?
Вĕçтĕр юрă ирĕклĕн ян та ян çӳл тӳпене...
Эсĕ — кимĕ, эпĕ кĕсмен пулам-и?
Ишер кун-çул тинĕсĕнче çĕнтерсе хумсене...
Эсĕ — хĕвел, эпĕ шевле пулам-и?
Юратса çутатар пĕрле савнă çĕре...
Анчах...
Эсĕ кĕсле пулаймăн, эпĕ — хĕлĕх,
Эсĕ кимĕ пулаймăн, эпĕ — кĕсмен.
Эсĕ хĕвел пулаймăн, эпĕ — шевле...
Пур пирĕн хушăра тепри,
Уйăрттараканни.
Апла пулсан,
Эпĕ сĕм каç пулам,
Тутлă ыйхуна сыхлам мĕн ирччен...
Апла пулсан,
Эпĕ чĕвĕлти чĕкеç пулам,
Итлесем кĕввĕме хĕвел аниччен...
Апла пулсан,
Эпĕ тумхахсăр сукмак пулам,
Ут эс кăмăллăн ĕмĕрӳ иртиччен...

* * *

Эсĕ те эпĕ малтан
Шăнкăравласса кĕтетĕн.
Эпĕ те эсĕ малтан
Шăнкăравласса кĕтетĕп.
Чĕрем калать:
Шăнкăравла, тет.
Илтмесĕр епле чăтатăн-ха, тет.
Савнин сассине

Шалти туйăм калать:
Ан шăнкăравла, тет.
Чăтсам кăштах, тет.
Хăй малтан
Шăнкăравлатăр, тет.
Эп тăратăп
Шухăш юппинче аптăраса,
Темĕн манăн тумалла,
Итлемелле такама:
Те чĕреме, те туйăма?
Çаплах кун иртет.
Çаплах çул иртет.
Çаплах пурнăç иртет...
...Эсĕ вара çаплах
шăнкăравламастăн.

* * *

Эсĕ шăпам пултăн.
Сисетĕн-и?
Шăпам.
Чылайччен шырарăмăр
Пĕр-пĕрне
Çут тĕнчере.
Тупрăмăр.
Пĕрле пулма
Тупа турăмăр.
Сана шыранă вăхăтра
Нумай йăнăш турăм.
Каçар.
Эсĕ веçех ăнлантăн,
Эсĕ каçартăн.
Анчах
Пурнăç каçармарĕ.
Темле йăлăнсан та,
Каçармарĕ —
Уйăрса ячĕ.
Эсĕ мана пăрахса кайрăн.
Уй варринчи

Пĕччен хурăн евĕр
Тăрса юлтăм сансăр.
Шăпамсăр пурнăç çук.
Туратăмсем хăрма пуçларĕç...

* * *

Пушă,
        пушă,
                пушă —
Чунра,
        пуçра,
                чĕрере,
                        тĕнчере —
Эсĕ çук чухне.
Юрă янрать чунра,
Шухăш кĕрлет пуçра,
Сиксе тапать чĕре,
Тулса ларать тĕнче —
Эсĕ манпа чухне.

* * *

Ялтăр!
Турĕ те
Çӳл тӳпере
Çут çăлтăр —
Сӳнчĕ.
Ялтăр!
Турăн та
Ман пурнăçра эсĕ —
Сӳнтĕн.

* * *

Ан хăра эс манран,
Эп сана ăнсăртран
Урамра тĕл пулсан.
Ним пулманла çуммăнтан
                        иртсе кайăп.
Эп сана пурăнма чăрмантармăп.

Ан хӑра кантӑкран
Эп пырса шаккасран.
Чӳрече каррине ан васка эс карма.
Сан ҫурту умӗнчен пӑрӑнса
утса кайӑп.
Эп сана пурӑнма чӑрмантармӑп.
Ан хӑра телефон кӗпҫинче
Ман сасса илтесрен.
Телефон номерне паянтан манса
кайӑп.
Эп сана пурӑнма чӑрмантармӑп.

* * *

«Эсӗ мана юрататӑн-и?» —
Манран тилмӗрсе эс ыйтатӑн.
«Эпӗ сана юратмастӑп»,—
Аран илтмелле хуравлатӑп.
Сӑну улшӑнать самантрах,
Куҫусем тӗпсӗр авӑр, ах!
Вилесчӗ вӗсенче путса часрах,
Хуҫиччен кӑмӑлна ҫурмаллах.
«Эп сана юратмастӑп».
Калатӑп ҫине ҫинех хӑвӑрттӑн:
Эп сана юратмастӑп.
Улталасшӑн эп, улталасшӑн,
Хыҫӑмран ҫӳрекен шӑпама
Чееленсе куҫҫӑнах тыттарасшӑн.
Анчах ҫак самантра ман
Пачах урӑх сӑмахсене калас килет:
«Эп сана юрататӑп»,— теес килет.
Тӗнче илтмелле вӗсене кӑшкӑрӑттӑм,
Мӑйунтан пырса уртӑнӑттӑм.
Калас сӑмахӑмсене
Пӗр шелсӗр ҫӑтатӑп.
Шӑла шӑтӑр! ҫыртса
Эп чӑтатӑп.
Ӑнлансам, тархасшӑн.

Шăпам хăйне евĕрлĕ манăн.
Йĕрлет хыçран пĕр вĕçĕм каварлăн.
Эп кăмăллакан каччăсене
Пăрса ярать вăл айккинелле.
Эп килĕштерменнисене
Пăхтарать ман çине.
Вутра çунтарать чĕрисене.
Эп сана юратмастăп.
Çине-çинех хăюллăн калатăп.
Пĕлсем,
Çак шелсĕр сăмахсем вырăнне
Пĕлтерес килет сана урăххисене.
Эс маншăн чи хаклă çын иккенне,
Эс маншăн чи çывăх çын иккенне.
Пĕр саншăн çеç хыпса çуннине.
Хама хам çĕнетĕп, чуна хытаратăп.
Куçунтан пăхса куççуль витĕр кулатăп.
Чĕрем вара юрлать хурлăх юррине.
Анчах илтеймĕн ун ĕсĕклекен сассине.
Ăнлансам, сана çухатасран эп хăратăп.
Çавăнпа пĕр чарăнми каллех эп калатăп:
«Çук, эп сана юратмастăп».
«Çук, эп сана савмастăп».
Тен, капла каласан, эс мана савăн.
Сан хыççăн чупмăп та, хăв чупăн.
Тен, ун чухне эс маншăн çунăн.
Асапланăн, ах, асапланăн.
Асап тутине астивсен,
Мана чăнласах эс хаклăн?
...Çитейĕ-ши чеелĕхĕм шăпама вăлтма?
Хăварĕ-ши вăл сана манпа?

*   *   *

Сана куç хӳрипе çеç пăхса
илес килнишĕн
Хама кураймастăп.
Куçсене куç хăвăлĕнчен
Чакаласа кăларас килет,

Çĕр айне чавса пытарас килет
Тăпра пулччăр çĕрсе!

Чĕлхем сан ятна калас килнишĕн
Хама кураймастăп.
Чĕлхеме çăвартан кăкласа
кăларас килет,
Юханшыва кайса пăрахас килет —
Юхса кайтăр инçе-инçе!
Чĕрем саншăн тунсăхласа,
Юнлă куççульпе çăваннишĕн
Хама кураймастăп.
Чĕреме кăкăртан тăпăлтарса.
кăларас килет.
Çунакан вучаха пăрахас килет,—
Кĕллентĕр хĕмленсе!
Сана ӳтĕмпе юратас килнишĕн
Хама кураймастăп.
Ӳтĕме татăкăн-татăкăн ваклас килет.
Уйваррине кайса пăрахас килет,—
Çăхансем яччăр çисе!
Чунăм сан чунупа
пĕрлешес килнишĕн
Хама кураймастăп.
Чунăма çунтарса ярас килет.
Чунăма шывра путарас килет!
Чунăма çĕр ăшне чикес килет!
Анчах чунăма алпа тытаймăн.
Чунăма куçпа кураймăн.
Чунăма виçепе виçеймĕн.
Пĕр вăхăт çеç пултарĕ
Чунăма сиплеме.

Пĕр вăхăт çеç пултарĕ
Кураймanлăхăма сирме.

* * *

Шыратăп.
Сан сăнна шыратăп
Кашни çын питĕнче.
Шыратăп.
Куллуна шыратăп,
Хĕвел шерепинче.
Шыратăп.
Куçусен хĕмне шыратăп
Ялтăр çиçĕмре.
Шыратăп.
Çепĕç сассуна шыратăп
Шăнкăр шыв юхăмĕнче.
Шыратăп.
Аллусен сĕртĕнĕвне шыратăп
Ачаш çилре.
...Ывăнтăм шыраса,
Лартăм шур чул çине канма.
Вăхăта ахаль сая янине
Илтĕм ăнланса.
Çут сăнару,
Янкăр куллу,
Куçун хĕмĕ,
Çепĕç сассу,
Ачаш аллусен сĕртĕнĕвĕ
Манра, манра иккен...

* * *

Больница.
Палата.
Хĕвел шевли вылять
Чӳрече çинче.
Виçĕ кĕлчечек
Сĕтел çинчи
Кĕленче вазăра.
Анчах... санран мар...
Койка.

Ун çинче эпĕ.
Операци хыççăн
Кашни ӳт тĕпренчĕкĕ чăтма çук сурать.
Çавах вĕсенчен те ытларах
Чун сурса ыратать.
Мĕншĕн тесен,
Алăк леш енче — эсĕ.
Анчах манăн мар,
Урăххин...
Суранран сăрхăнса
Хĕп-хĕрлĕ юн пит тăрăх юхать...
Тен, ку ман чун,
Юнлă куççульпе
Санăн çепĕçлĕхӳшĕн хурланса йĕрет...

*   *   *

Самантлăха çеç
Кĕртсе кăтартасчĕ сана
чунăма-çĕршыва.
Ăнланăттăн ун чухне
Пурнăçăнти чи пысăк çухатăва.
...Сарă кун çĕршывĕ чунăмра.
Кăвак тӳпе пĕр пĕлĕтсĕр, таса.
Çиççе пăхать хĕвел ялан упта.
Ӳсеççĕ чечексем, юрлаççĕ кайăксем.
Шăнкăртатса юхаççĕ çăлкуççем.
Пулса курнă пулсан, чунăмра-çĕршывра
Уйрăлнăшăн манпа шеллĕттĕн хăвна.
Тупаймăн эс çак тĕпсĕр уçлăхра
Чунăмри пек сар кун...

*   *   *

Эс тепринпе каятăн —
Çавах эс ăна мар —
Эс мана саватăн.
Сан куçусем каларĕç
мана кун çинчен.
Эс тепринпе каятăн,
Çавах эс ăна мар —

Эс мана саватӑн.
Сан куллу систерчӗ
мана кун ҫинчен.
Эс тепринпе каятӑн,
Ҫавах эс ӑна мар —
Эс мана саватӑн.
Сан хумханӑву пӗлтерчӗ
мана кун ҫинчен.
Эс тепринпе каятӑн.
Ҫавах эс ӑна мар —
Эс мана саватӑн.

Тепринпе каясси сан тивӗҫӳ.
Мана савасси сан инкекӳ.

* * *

Эп сана чуптурӑм —
Ҫепӗҫ! питҫӑмартинчен.
Эп сана чуптурӑм —
Хӑвӑрт! Эсӗ сисиччен.
Эп сана чуптурӑм —
Вӑрттӑн! никам куриччен.
Асилӳ ҫеҫ юлтӑр
Терӗм! санӑн ман ҫинчен.
Ҫук, пытараймарӑм
Хам вӑрттӑнлӑха.
Шухӑ ҫил-ҫке курчӗ
Ман айванлӑха.
Туххӑм! ҫил вӑрларӗ
Ман чуптӑвӑма.
Тытрӗ те пытарчӗ
Инҫет чӑтлӑхра.
Шыраса тупаймӑн
Эсӗ халь ӑна,
Кулянса эп юлтӑм,
Ассӑн сывласа.

* * *

Эп сана шухăшласа
Кăларнă пулăттăм,
Эс çак тĕнчере
Пурăнман пулсассăн.
...Пур эсĕ çак тĕнчере.
Пурăнан манпа пĕрле.
Апла пулсан,
Кирлех-ши сана шухăшласа кăларма?
Пĕр ĕмĕтпе çеç йăпанса пурăнма?

* * *

Ытла хытă юратрăм пулмалла сана,
Пуçа ăссăрла çухатса,
Хама тата хамăн
Мăнаçлăхпа тивĕçлĕхе
Сан урусем умне пăрахрăм.
Сан умăнта мĕскĕнленсе
Куççуль тăкрăм.
Хамăн туйăмăн чури пулса,
Санăн чуру пулса тăтăм.
Эсĕ, хăвна пысăка хурса,
Манăн хуçа пулнине туйса,
Вĕçĕ-хĕррисĕр влаçпа савăнса,
Ахăрса кулса,
Мана тата манăн
Тивĕçлĕхпе мăнаçлăха
Шелсĕр таптарăн.
Çĕрпе танлаштартăн.
Вара тин
Манра тӳлеккĕн тĕлĕрекен
Чысăм вăранчĕ.
Вăл мана вилĕ шывпа
Унтан чĕрĕ шывпа сапрĕ.
Чĕрĕлтĕм эпĕ...
Çӳллĕ çĕклесе пуçа,
Каялла пăхмасăр çаврăнса,
Утрăм сапран пăрăнса.

* * *

Юрату Çуркунне,
Çĕр хĕл ытамĕнчен ерипен уйрăлса,
Сивĕ куççуль тăкнă самантра,
Ăшă енчен тăван таврана
Хуркайăксем карталанса вĕçнĕ самантра,
Папкасем сар хĕвел патне туртăнса,
Черчен çулçисене сарнă самантра
Çынсен чĕрисенче çăмăллăн,
Ирĕклĕн çуралать, теççĕ.
Тĕрĕс-ши ку?
Пĕлместĕп.
Тавлашмастăп.
Ман чĕрере юрату асаплăн,
Хăй çулĕ çинче веçех
Тĕлли-паллисĕр аркатакан
Çил-тăвăл евĕр
Кĕркунне
Вирхĕнсе кĕчĕ.
Кĕчĕ те, айăпа кĕнĕн
Чĕре тĕпĕнче лăпкăн шăпланчĕ.
Тĕнче тӳрех тĕлĕнмелле улшăнчĕ.

Чунăм — шап-шурă çеçкене ларнă улмуççи.
Юрату манра çуркуннене çуратрĕ.
Халĕ пĕлетĕп эпĕ:
Çуркунне мар çуратать юратăва,
Юрату — çуркуннене.

* * *

Кĕрех.
Ирт.
Лар.
Пӳрт çумĕпе пынă май иртсе
Хăна пулса,
Кĕрсе курас терĕн-им?
Мĕнле пурăнать-ха ку мансăр,

Пурнăçне еплерех йĕркелесе янă, тесе
Шутларăн-им?
Ан тинкер хура куçусемпе
Куçăмран ыйтуллăн.
Вĕсенче эс куççуль кураймăн.
Вĕсенче эс куççуль тупаймăн.
Мĕн пулни тахçанах манăçрĕ.
Вăхăт суранăма сиплерĕ.
...Тахçан савни пулса килеттĕн.
Манпа пĕрле пулма ĕмĕтленеттĕн.
Анчах теприн сăмахĕсем
Çепĕçрех, илĕртӳллĕрех пулчĕç.
Пурнăç тӳшекки те
Тепринпе çемçерех туйăнчĕ.
Кайрăн эс тепринпе.
Юрĕ, ан çиллен.
Айăпласа каламастăп.
Сана тахçанах каçартăм.
Чуна тамăкри пек çунтартăн пулсан та
Каçартăм.
Юратăвăма вĕлерме вара
Хал çитерейместĕм.
Кун-çул вучахĕнче хурçă пек
Хĕртсе çирĕплетрĕм.
Ахах-мерчене упранă пек
Çынсен вĕчĕрхенчĕк куçĕсенчен
Чĕре тĕпĕнче пытарса упрарăм.
Тайма пуç сана,
Юратма вĕрентнĕшĕн,
Юрату парнеленĕшĕн.
Хама çак çут тĕнчере
Чи телейлĕ çын, теме пултаратăп.
Мĕншĕн тесен, эпĕ пĕччен мар.
Ман юрату пур.
...Хăна пултăн пуль.
Эп сансăр мĕнле пурăннине пĕлтĕн пуль.
Халь каях,
Сывă пул.
Иртен-çӳренĕн хăйĕн çулĕ...

* * *

Килсем часрах.
Эп кӗтетӗп сана.
Килсемччӗ!
Тутам
Типсе, ҫуркаланса
Пӗтнӗ ҫӗр.
Туту-тумламупа
Шӑварсам ӑна
Ачашшӑн-ачашшӑн.

Килсем.
Васкасам!
Эп кӗтетӗп сана.
Куҫӑм
Йӗре-йӗре типсе
Ларнӑ ҫӑл.
Куҫупа-ҫӑлкуҫупа
Пӑхсам куҫсенчен.
Чӗртсем вӗсене.

Килсем.
Тархаслатӑп!
Эп кӗтетӗп сана.
Чунӑм —
Кӗлленме пуҫланӑ
Вучах.
Пӑрахсам пӗр шелсӗр
Кӑвайт-юрату.
Ҫунам эп хӗмленсе,
Таврана хӗмлентерсе.

Килсем.
Килсемччӗ!
Эп кӗтетӗп сана.
Сансӑр пурнӑҫ ҫук...

34030-губ
Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

* * *

Ыран, тен, эпĕ
Хам ăссăрла хăтланнинчен
Хамран хам ахăлтатса,
Елпĕрсе кулăп.
Ыран, тен, эпĕ
Кăкăрта ăшăнса вăй илнĕ
Кайăка-юратăва ирĕклĕхе вĕçтерĕп.
Ыран, тен, эпĕ,
Сана савса халтан кайнăскер,
Чунра сарăлса çурăлнă
Черчен кĕрен чечеке
Тымарĕпех кăкласа кăларса,
Шелсĕр таптăп, çунтарăп.
Ку пĕтĕмпех ыран пулĕ.
Паян вара...
Паян эп санпа тĕлпулу шыратăп.

Санпа, пĕр санпа,
Ялан пĕрле пулма,
Ĕмĕр сакки çине ларма,
Ĕмĕтленме хăятăп.
Пĕр самактлăха çеç
Кăкру çумне тĕршĕнме
Ĕмĕтленетĕп.
Ку — пĕтĕмпех паян...

* * *

Кĕт мана, килетĕп, терĕн.
Хуйхуна сиретĕп, терĕн.
Кĕтрĕм-кĕтрĕм сана,
Кĕтсе илеймерĕм...
Хуйăхăм татах та пысăкланчĕ.

* * *

Нумайччен кĕтрĕм санран
Илтес тенĕ сăмахсене.
Аранах пуçтарăнтăн,
Каларăн.
Анчах эс кая юлтăн...

Нумайччен кĕтрĕм санран
Эс чĕнессе.
Аранах вăхăт тупрăн.
Чĕнтĕн.
Анчах эс кая юлтăн...

Нумайччен кĕтрĕм санран
Эс килессе.
Аранах пуçтарăнса çула тухрăн.
Çитрĕн.
Анчах эс кая юлтăн...

* * *

Каласам:
Мĕн туса сан умăнта
Айăпа кĕтĕм?
Каласам.
Ан тăр чĕнмесĕр...
Тархасшăн, каласам.
Пĕр сана çеç юратнăшăн-и?
Кунĕн-çĕрĕн пĕр сана çеç кĕтнĕшĕн-и?
Чĕрем ялкăшса пĕр саншăн çеç çуннăшăн-и?
Мĕншĕнне çеç каласам?
Тӳрех лăпланĕ чунăм...

* * *

Тăхăрвун тăхăр çăра илтĕм.
Тăхăрвун тăхăр алăк хыçне
Шухăшла-шухăшла антăхтарнă

Туйăма питĕрсе хутăм.
Инçе çула пуçтарăнтăм.
Тăхăрвун тăхăр вăрман витĕр тухрăм.
Тăхăрвун тăхăр сăрт-ту урлă каçрăм.
Тăхăрвун тăхăр юханшыв ишсе каçрăм.
Тăхăрвун тăхăр пушмак улăштартăм.
Çын шыраса тупайман
Тинĕс хĕррине пырса тухрăм.
Тăхăрвун тăхăр çăра уççисене
Ывăтрăм кăпăклă хумсем айне.
Ан туптăр никам нихăçан!
Тинех лăплантăм.
Тăван таврана каялла таврăнтăм.
Утса пынă чух урампа
Ăнсăртран куртăм сана.
Куçăм куçупа тĕл пулчĕ.
Куçусен хĕмĕ тăхăрвун тăхăр çăрана
Çунтарса ячĕ.
Тăхăрвун тăхăр алăк яриех уçăлчĕ.
Туйăмăм ирĕклĕхе капланса тухрĕ.
Чуна вут хыпрĕ.
Ăçта хамран хам тарса пытанам-ши?

* * *

Епле-ха эп пурнăçа айăплам?
Хам айăплă пулсан.
Епле-ха эп сана айăплам?
Хам айăплă пулсан.
Мĕн тăвас-ха ман,
Аттепе анне çут тĕнчене
Айăплă пурăнма çуратса янă пулсан?

* * *

Тинкер-ха тӳпене:
Мĕн чухлĕ ялтăр çăлтăр!
Сана савса, ĕмĕр асăнма,

Парнелем-и пĕрне, терĕн.
Чи йăлтăрккине,
Куçа илĕртекеннине.
Шурăмпуç çăлтăрне
Ятăмпа илемлетрĕн.
Хăвна валли вара,
Сиссе-ши малтанах уйрăласса,
Мантăн тантăш-çăлтăр суйлама.
Янкăр уйăхлă каçсенче те,
Кăвак шуçăм шуралса
Килнĕ самантра та,
Çӳл тӳпере,
Мăшăрсăр пулсан та,
Çăлтăрăм
Чи çуттиччĕ.
Чи кăмăлличчĕ.
Халĕ вара
Иксĕмĕр те юлтăмăр тăлăха.
Пин-пин ялтăр çăлтăр хушшинче
Тӳпери тантăшăм
Чи тунсăхли,
Чи кичемми.
Пин-пин çын хушшинче
Эпĕ те сансăр.

* * *

Эпĕ, эсĕ, вăл.
Вăл, эпĕ, эсĕ.
Эсĕ, вăл, эпĕ.
Яланхи виçкĕтеслĕх...
Ăçта-ши ун пуçĕ?
Ăçта-ши ун вĕçĕ?
Ăçта-ши ун тупсăмĕ?
Кĕвĕçӳ.
Ылхану.
Кӳлешӳ.
Ăнлану.
Савăшу.

Савăнăç.
Йăл кулă.
Куççуль.
Хурлăх.
Телей.
Яланхи виçкĕтеслĕх...
Вĕçленми виçкĕтеслĕх...
Эпĕ, эсĕ, вăл.
Вăл, эпĕ, эсĕ.
Эсĕ, вăл, эпĕ.

* * *

Сан туту — тăп-тăрă çăлкуç.
Епле ĕçсе тăранам-ши,
Тутлă, сиплĕ шывна?

* * *

Сана юрататăп, тет пĕри.
Сана эп курасшăн, тет тепри.
Санпа тĕл пуласчĕ, тет пĕри.
Саншăн тунсăхлатăп, тет тепри.

Çакă çутă та аслă çĕр çинче
Манăн тĕнче пысăкăш тунсăхăм —
Саншăн.
Çакă çутă та аслă çĕр çинче
Манăн чĕре пуянлăхĕ —
Саншăн.

Çакă çутă та аслă çĕр çинче
Манăн чунăм илемлĕхĕ —
Саншăн.
Çакă çутă та аслă çĕр çинче
Манăн ăнтăлăвăм —
Саншăн.
Çакă çутă та аслă çĕр çинче
Пĕр çын анчах кирлĕ мана —

Эсӗ.
Ҫакӑ ҫутӑ та аслӑ ҫӗр ҫинче
Пӗр ҫын анчах кирлӗ мар сана —
Эпӗ.

*   *   *

Лӗпӗш пулса вӗҫсе ҫитесшӗнччӗ сан патна,
Асӑрханаймарӑм, лекрӗм атмана.
Пӑлан пулса чупса ҫитесшӗнччӗ сан патна,
Асӑрханаймарӑм, лекрӗм йӑлмана.
Пулӑ пулса ишсе ҫитесшӗнччӗ сан патна,
Асӑрханаймарӑм, лекрӗм сӗрекене.
Пӗлеймерӗм майне-шывне ҫитме сан патна,
Кӗвӗҫӳллӗ чунсем сыхларӗҫ кашни утӑма.
Лӗпӗш пулсан, ҫунатӑмсене татрӗҫ.
Пӑлан пулсан, тирӗме сӳрӗҫ.
Пулӑ пулсан, ӑшаласа ҫирӗҫ.

*   *   *

Ҫынсем нумайччӗ сан тавра,
Ҫавна пула, калас сӑмахӑма
Куҫ хӳрипе систертӗм эп сана.
Ӑнлантӑн эс мана.
Кӑшт хӗсрӗн те куҫна
Эп сисмелле пӗлтертӗн кӑмӑлна.
...Кирлӗ мар куҫсене сӑмахсем.
Сӑмахсӑрах пӗлеҫҫӗ калаҫма вӗсем.
Сӑмахсӑрах пӗлеҫҫӗ пурӑнма.
Сӑмахсӑрах пӗлеҫҫӗ юратма.

*   *   *

Эсӗ — ӑшӑ ҫумӑр.
Типрӗ ман чун.
Шӑварсам чунӑма — улӑха.
Ан шелле сипетлӗ шывна.
Ем-ешӗл курӑк туххӑм!

Чашлатса ӳссе ларӗ чунра.
Эс кунçул тинӗсӗнче ишсе ывӑнсассӑн
Ирӗк парӑп сана чунӑмра-улӑхра
Выртса канса вӑй илме.

* * *

Пулсан пул эсӗ
Йӑлтах: кӑмӑлупа, ӳтӳпе, шухӑшупа —
Манӑн.
Манӑн мар-тӑк
Пулсан пул эсӗ
Йӑлтах: кӑмӑлупа, ӳтӳпе, шухӑшупа —
Унӑн.
Хамӑн вӑйлӑ туйӑма
Пайлас çук эп
Тепринпе
Çурмалла.

* * *

Енчен те эсӗ
Ху пӗр ирхине çӳл тӳпене
Сар хӗвелле
Çиçсе хӑпарасса
Пӗлетӗн пулсан,
Енчен те эсӗ
Хӑвӑн юратӑву ирӗке юратакан
Вут-кайӑк иккенне
Пӗлетӗн пулсан,
Хӑвӑртрах
Юратӑвун
Çирӗпленсе çитеймен çунаттисене
Хура çӳç пайӑркисемпе çых та,
Кӑпӑкланакан шыв сиккине пӑрах.
...Мана çавах.
Чунӑн пӗр хӗлӗхӗ те янрамӗ.
Хам аллӑмпа хам,
Пӗрре çеç мар
Тин çуралнӑ юратӑвӑма
Тарӑн шӑтӑк чавса пытартӑм.

* * *

Çук, сана текех чĕнместĕп.
Çук, сана текех кĕтместĕп.
Çунчĕ, çунчĕ те вучахăм — сӳнчĕ.
Шупка кăвак кĕл çеç тăрса юлчĕ.
Çук, тĕлĕкре сăнупа аташмастăп.
Çук, шăплăхра ятна пăшăлтатмастăп.
Çунчĕ, çунчĕ те вучахăм — сӳнчĕ.
Шупка кăвак кĕл çеç тăрса юлчĕ.
Çав кĕле сив çилпе сапаламăп.
Эп ăна ывăçласа пуçтарăп.
Шурă-шурă тутăрпа çыхса,
Хурăп асăнмалăх пуçтарса.

* * *

Хама хам та ăнланаймастăп
Тепĕр чухне.
Сансăр та пурăнма пултараятăп пек,
Сансăр та пурăнма пултараймастăп пек.

Сана аса çеç илсен,
Кăмăла ирĕке ярса
Чечеклĕ улăхра чупас килет.

Сана аса çеç илсен,
Урайĕнче йăваланса
Хӳхлес килет.

Санпа тĕл пулсан,
Кулянатăп шухăшласа
Çитес уйрăлу çинчен.

Санпа тĕл пулсан,
Шухăш пек вĕçсе
Санран тарас килет.

Хама хам та ăнланаймастăп
Тепĕр чухне.
Сансăр та пурăнма пултараймастăп пек,
Сансăр та пурăнма пултараятăп пек.

* * *

Чупрăм тухрăм укăлчана
Тĕл пулма тесе сана.
Кĕтрĕм-кĕтрĕм, эс килмерĕн,
Ах, ăçта-ши эс çӳрерĕн?

Укăлча умĕнчи шурă хурăн,
Ан сăна эс мана питĕ хурлăн.
Ан шелле эс мана, ан шелле.
Йĕрсе ярăп атту хӳхлесе.

Кĕтрĕм-кĕтрĕм, пĕтрĕ чăтăм,
Хурланса ахлатса эпĕ ятăм.
Шăплăха çурса вĕçрĕ сассăм,
Каялла çаврăнса килчĕ ахрăм.

Тĕм айĕнче çыврăран çил ачийĕ
Сассăма-ши илтсе вăл вăранчĕ?
Çăмăллăн чупса-вĕçсе пычĕ,
Самантрах ман савни пулчĕ тăчĕ.

Шăпăр-шăпăр юхан куççуле
Чуптурĕ — типĕтрĕ.
Саншăн хĕрӳленнĕ ӳтĕме
Ыталарĕ — сивĕтрĕ.

Ыр сăмахшăн кӳтнĕ чунăма
Ыр сăмахпа йăпатрĕ.
Пăрланма пуçланă чĕреме
Ачашларĕ — ăшăтрĕ.

...Ан юрат эс мана, çил ачи.
Пулас çук эс çавах чун савни.

Манăн чунăм кĕтет теприне.
Вăл шанать çав çын килессине.

* * *

Ик чĕре паян телейлĕ.
Ик чĕре пĕр юрă юрлаççĕ.
Ик чĕре калама çук телейлĕ,
Ик чĕре пĕр-пĕрне тăнлаççĕ.

Пĕлĕт анать час-час йăтăнса,
Çумăр çăвать çĕре çапса.
Аслати авăтать ахлатса,
Çил-тăвăл тустарать урса.

Ик чĕрешĕн çанталăк лăпкă.
Ик чĕрешĕн тĕнче сăпка.
Утюкка пĕрле ярăнаççĕ,
Савăнса пĕр юрă юрлаççĕ.
Ик чĕре тинех пĕрлешнĕ.
Ик чĕре пĕр каварлăн тапаççĕ.
Пурнăç тертне çĕнтернĕшĕн
Телей юррине юрлаççĕ.

...Çилпе çумăр витĕр çăмăллăн
Çав юрă вĕçет ирĕклĕ кайăкăн.

* * *

Эп ывăнтăм ухмахла пурăнса,
Ман пĕтрĕ чăтăм.
Эп алăка юлашки хут хупатăп.
Эп каятăп.

Эп ывăнтăм сана кĕтсе,
Ман пĕтрĕ чăтăм.
Эп алăка юлашки хут хупатăп.
Эп каятăп.

Эп ывӑнтӑм куҫҫуль тӑкса,
Ман пӗтрӗ чӑтӑм.
Эп алӑка юлашки хут хупатӑп.
Эп каятӑп.

Эп ывӑнтӑм мӗскӗнленсе,
Ман пӗтрӗ чӑтӑм.
Эп алӑка юлашки хут хупатӑп.
Эп каятӑп.

Эп ывӑнтӑм сана юратса,
Ман пӗтрӗ чӑтӑм.
Сана кун-ҫулӑмран чӗрсе пӑрахатӑп.
Эп алӑка юлашки хут хупатӑп.
Эп каятӑп...

* * *

Ан чӗн мана,
Ан йыхӑр,
Ан тархасла...
Ӗненместӗп сана,
Ӗненместӗп.
Каялла таврӑнма килӗшместӗп.
Сутрӑн эс пӗррехинче
Юратӑва!
Таврӑнсассӑн,
Сутӑн эсӗ
Пурнӑҫа!

* * *

Кӑштах анчах сан ӑнланӑву
Кирлӗччӗ мана тулли телейлӗ пулма.
Кӑштах анчах сан ҫепӗҫ сӑмахусем
Кирлӗччӗ мана тулли телейлӗ пулма.
Кӑштах анчах сан ӑшӑ куллу
Кирлӗччӗ мана тулли телейлӗ пулма.
Кӑштах анчах сан юратӑву

Кирлĕччĕ мана тулли телейлĕ пулма.
Кăштах анчах...
Эпĕ телейлĕ пуласран хăраса,
Шеллерĕн ăнланăвна,
Шеллерĕн çепĕç сăмахусене,
Шеллерĕн ăшă куллуна,
Шеллерĕн юратăвна.
...Эпĕ вара — пурпĕрех телейлĕ.
Илтетĕн-и?
Пурпĕрех.
Ман ĕмĕтре эсĕ пур.

* * *

Кĕтме пĕлекенсем телейлĕ,
Терĕн эс уйрăлнă чух йăл кулса.
Çепĕççĕн мана чуптуса,
сывпуллашса,
Телей шырама,
инçе çула кайрăн тухса.
Манран пин те пин çухрăмра.
Çӳллĕ тусем çинче,
Манран пин те пин çухрăмра
Анлă тинĕс хĕрринче,
Манран пин те пин çухрăмра
Вĕçĕ-хĕррисĕр пушхирте
Халĕ çӳретĕн эсĕ,
Телейлĕ пулма ĕмĕтленсе.
Эпĕ вара тăван килте
Чӳрече умĕнче
Тăратăп каçсерен сана кĕтсе.
«Кĕтме пĕлекенсем телейлĕ».
Кăлт! кăлт! тапать чĕре.
«Кĕтме пĕлекенсем телейлĕ»,
Чупать вĕриленсе юн ӳтĕмре.
«Кĕтме пĕлекенсем телейлĕ».
...Эпĕ пĕлетĕп кĕтме.

* * *

Вăрттăн юрату тутине пĕлеттĕм эпĕ.
Симпылччĕ вăл малтан, тутанса çеç пăхсан.
Ай-яй, тутлăччĕ!

Вăрттăн юрату сассине пĕлеттĕм эпĕ.
Шăпчăк чĕвĕлтетĕвĕччĕ унра, итлеме çеç пуçласан.
Ай-яй, пуçа çавăратчĕ!

Вăрттăн юрату тĕсне пĕлеттĕм эпĕ.
Асамат кĕперĕ пек çиçетчĕ вăл, тин çеç курсан.
Ай-яй, куçа йăмăхтаратчĕ!

Вăрттăн юрату хĕмне пĕлеттĕм эпĕ.
Чуна ăшăтатчĕ вăл малтан, аякран çеç курсан.
Ай-яй, йăлкăшса çунатчĕ!

Вăрттăн юрату тутине пĕлетĕп эпĕ халĕ:
Эрĕм тутиллĕ пулчĕ тăчĕ, çăтса ярсан.
Ай-яй, йӳçĕ-çке!

Вăрттăн юрату сассине пĕлетĕп эпĕ халĕ:
Курак сассиллĕ пулчĕ тăчĕ, итлесен-итлесен.
Ай-яй, хăрушă саслă-çке!

Вăрттăн юрату тĕсне пĕлетĕп эпĕ халĕ:
Йăм хура тĕслĕ пулчĕ тăчĕ, пăхсан-пăхсан.
Ай-яй, суккăрлатрĕ ячĕ!

Вăрттăн юрату хĕмне пĕлетĕп эпĕ халĕ:
Асар-писерле çунма пуçларĕ, çывăхрах пырсан.
Ай-яй, чуна ĕнтрĕ илчĕ!

* * *

Ирĕклĕн,
Тăрна пулса,
Вĕçрĕн эс ярăнса,

Çӳл тӳпере
Эпĕ сана савнă чух.
Пĕрле пулас тенĕ чух.

Мĕн тăвас тейĕн,
Кашнин шăпи хăйĕн.
Вĕçех...
Эпĕ вара теме шанса,
Алла тăсрăм малалла.
Ал тупанĕ çине
Пычĕ ларчĕ кăсăя.

* * *

Пĕр чĕптĕм, самантлăха
Чарасчĕ çĕр чăмăрне çаврăнма.
Вăхăт йĕпписене ярасчĕ çавăрса,
Чупччăр вĕсем хăвăрттăн каялла.

Пĕр чĕптĕм самантлăха
Таврăнасчĕ пурнăçăмри чи телейлĕ куна:
Пулсам эсĕ манăн, тенĕ вăхăта.
Тăмасăр турткаланса,
Мăнаçлăха манса,
Чупăвасчĕ сана антăхса.
Пуласчĕ санăн! санăн! тупата.
Савниçĕм, теесчĕ шăплăха çурса.
Çиçĕм пек çиçесчĕ те сӳнесчĕ
Çĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ вырăнта.
Пĕр чĕптĕм, самантлăха
Чарасчĕ çĕр чăмăрне çаврăнма.
Юласчĕ ман яланлăха
Пурнăçăмри чи телейлĕ кунра.
Çав самант иртсен,
Çаврăнтăр çĕр чăмăрĕ мансăр малалла...

*   *   *

Пĕр сăмах çеç шăппăн каларăн эсĕ:
Килсем, терĕн.
Уяр кунта çӳл тӳпере аçа çапрĕ, тейĕн.
Килсем...

Тăн икĕ пая çурăлса уйрăлчĕ.
Килсем...

Ура айĕнче çĕр чĕтренчĕ.
Килсем...
Ту тăрринчи шур юр
Хăрушшăн капланса шума тытăнчĕ.
Килсем...
Тĕлĕннипе вăхăт та тилхепине пушатрĕ.
Килсем...
Чĕре те самантлăха тапма чарăнса,
Сан йыхравна тăнларĕ.
Килсем...
Чун ыратăвĕ, пĕр пĕчĕк пăнчă пулса,
Тăнлавран пырса çапрĕ.
Килсем...

*   *   *

Енчен те манăн икĕ пурнăç
Пулнă пулсан,
Тата майĕ те тупăннă пулсан,
Эпĕ шутласа тăмасăрах
Парнелĕттĕм сана пĕр пурнăçа.
Çук манăн икĕ пурнăç.
Пĕрре анчах панă анне мана.
Пурпĕрех, май пулнă пулсан,
Эпĕ пĕр иккĕленмесĕрех
Ăна парăттăм сана.
Енчен те эсĕ кунçулна
Ман пурнăçпа
Пултарнă пулсан тăсма.

Манран телейлӗрех этем
Тупӑнӗччӗ-ши ҫак ҫут тӗнчере?

* * *

Пӗр утӑмччӗ санпа ман хушӑра.
Пӗр утӑм...
Яр та пус.
Эсӗ те тумарӑн ӑна,
Мӑнаҫлӑхна пула.
Эпӗ те тумарӑм ӑна,
Мӑнаҫлӑха пула.
Санӑн та чуну ҫунчӗ.
Манӑн та чун ҫунчӗ.
Ҫавах мӑнаҫлӑх
Юратуран хӑватлӑрах пулчӗ.
Пӗр утӑмччӗ санпа ман хушӑра.
Пӗр утӑм...
Ҫав утӑм халь
Ик пурнӑҫ тӑршшӗ
Пулчӗ тӑчӗ...

* * *

Каласам ун ятне,
Кӑтартсам ун сӑнне,
Кама эс ҫав тери саватӑн?
Кама эс мухтаса юрлатӑн?
Тӗпчеҫҫӗ тусӑмсем,
Пӗлесшӗн тантӑшсем.
Эх, тусӑмсем,
Эх, тантӑшсем,
Кирлех-ши ун ятне сире пӗлме,
Кирлех-ши ун сӑнне сире курма?
— Эпӗ вӗт саватӑп,
Эпӗ вӗт юрлатӑп.
Апла пулсан — пурнатӑп...

* * *

Эпӗ паян — асамҫӑ.
Ӑшӑ свитер ҫыхатӑп.
Эпӗ паян — асамҫӑ.
Тӑрӑшсах ӑрӑмлатӑп.
Аллӑмра йӗпсесем выляҫҫӗ.
Урайӗнче ҫӑм ҫыххисем
кускалаҫҫӗ.
Эпӗ паян — асамҫӑ.
Ӑшӑ свитер ҫыхатӑп.
Эпӗ паян — асамҫӑ.
Тӑрӑшсах ӑрӑмлатӑп.
Пӗр куҫ ҫыхатӑп.
Унтан тепре.
Тута хӗррипе
Пӑшӑлтататӑп хуллен.
Эпӗ сана саватӑп.
Этемлӗх шутласа тупнӑ
Чи асамлӑ сӑмахсем калатӑп.
Эпӗ сана саватӑп.
Эпӗ сана саватӑп.
Виҫӗ асамлӑ сӑмах
Кашни куҫа кӗрсе вырнаҫать.
Ҫӗр пин куҫ ӑшӗнче
Пин-пин хут вӑйланать.
Аллӑмри свитер
Кашни куҫ ҫыхмассерен
асамланать.
Эпӗ паян — асамҫӑ.
Ӑшӑ свитер ҫыхатӑп.
Сана чир-чӗртеп сивӗре
Сыхлама эпваскатӑп.

* * *

Сана курманни пин те пӗр ҫул.
Сассуна илтменни пин те пӗр ҫул.
Сана ачашламанни пин те пӗр ҫул.

Чӗтрекен аллӑмпа телефон ҫаврашкине
ҫавӑратӑп.
Хӑвӑртрах! Хӑвӑртрах! Хӑвӑртрах!
Сан ҫепӗҫ сассуна илтме эп васкатӑп.
Чунӑм тунсӑхпа тулнине
пӗлтерме ӑнтӑлатӑп.
Телефон кӗпҫинче сасӑ янраса кайрӗ
вӑраммӑн.
Лини вӗҫӗнче сан сассу илтӗнчӗ пит ӑшшӑн:
«Калаҫӑр, итлетӗп».
Чунӑм пылак туйӑмпа ларчӗ тулса,
Сассу ҫепӗҫ кӗввӗн янрарӗ хӑлхара.
«Салам! Ку эпӗ...» —
Чӗтрет сассӑм хумханнипе.
Сана курас килет.
Санпа пулас килет.
Мӑшӑр ҫунатчӗ халь мана,
Ҫиҫӗммӗн ҫитӗттӗм вӗҫсе сан патна.
Хурӑттӑм кӑкӑрӑм умне сан пуҫна.

Чуптӑвӑттӑм хуллен сан куҫна.
Анчах мӗн эп илтетӗп? —
Хама хам та ӗненместӗп.
Ним пулманла эс хуравлатӑн:
«Эсир телефон номерне йӑнӑш ҫавӑрнӑ.
Каҫарӑр, эп сире паллаймарӑм».
«Епле-ха капла, паллаймарӑн мана?
Ку эпӗ-ҫке, эпӗ!»
Ах, чӗтрет-ҫке сассӑм, ним тӑваймӑн.
Савниҫӗм, чӑтма ҫук сана курас килет.
Савниҫӗм, чӑтма ҫук санпа пулас килет.
Савниҫӗм, тархасшӑн, палласам мана.
Савниҫӗм, тархасшӑн, ан пӑрах мана.
Чӑтӑмсӑррӑн кӗтрӗм паянхи куна.
Ах, васкатрӑм-ҫке, васкатрӑм вӑхӑта.
Чӗрем витӗр сӑрхӑнтартӑм кашни ҫеккунта.
Анчах каллех мӗн эп илтетӗп?
Хама хам каллех ӗненместӗп.
Сассу пӗр хумханусӑр, лӑпкӑ та ачаш:

«Тепӗр хут каçарăр, тархасшăн,
Эпӗ сире çавах паллаймарăм.
Ну юрӗ, сыв пулăр...»
Телефон кӗпçинче сасă вăрăммăн кайрӗ
янраса:
Пик, пик, пик, пик, пик, пик, пик...
Ах, турах, куçа хура тӗтре илчӗ карса,
Пӗтӗм тӗнче ларчӗ туххăм хуралса.
Ура айӗнчен çӗр кайрӗ таçталла шуçса.
Час-час ӳкесле тăратăп сулланкаласа.
Пӗр шухăш çеç пуçра явăнать.
Вăл çӗçӗ евӗр чуна касать,
Паянтан эсӗ маншăн ют çын,
Паянтан эпӗ саншăн ют çын.
Ăшра темӗн шалтлатса татăлчӗ,
Çутă çаврашкан ура айне ӳкрӗ,
Юлашки хут куçа йăмăхтарса çуталчӗ,
Хăвăрттăн малалла кусса-кусса кайрӗ,
Таçта аякра куçран çухалчӗ...

* * *

Эсӗ — тӗнче уçлăхӗ.
Эпӗ — санăн çӗр чăмăрӗ.

Эсӗ — вӗçӗ-хӗррисӗр тинӗс.
Эпӗ — санăн кăпăшка хуму.

Эсӗ — çӳллӗ ту.
Эпӗ — санăн вылявлă шыв сикки.

Эсӗ — шавлă юханшыв.
Эпӗ — санăн сӗвек çырану.

Эсӗ — кӗрнеклӗ юман.
Эпӗ — санăн шӗпӗлти çулçу.

Эсӗ — хитре саркайăк.
Эпӗ — санăн чи çепӗç юрру.

* * *

Пĕлсем:
Манăн сана çурхи çил ем-ешĕл курăка
Ачашланă пек ачашлас килет.
Пĕлсем:
Манăн сана шăнкăрч хăй чĕппине
Хӳтĕленĕ пек хӳтĕлес килет.
Пĕлсем:
Манăн сана пыл хурчĕ чечек сĕткенне
Савнă пек савас килет.
Пĕлсем:
Манăн сана куç шăрçине
Сыхланă пек сыхлас килет.
Пĕлсем:
Манăн çак тĕнчере
Пĕр саншăн пурăнас килет.

* * *

Пăхас та теменччĕ сан çине.
Савас та теменччĕ эп сана.
Сар уйăх пулса килеттĕм
кaçсерен тӳпене,
Кĕмĕл сапаттăм ывăçласа
çĕр пичĕ çине,
Сыхлаттăм савакансен тӳлек ыйхине.
Пăхас та теменччĕ сан çине.
Савас та теменччĕ эп сана.
Тĕл пултăм та сана çăлтăр çулĕ çинче,
Йăлтах илтĕн эсĕ мана тыткăна.
Ман сарă хĕвелĕм,
Ман хĕрӳллĕ хĕвелĕм,
Ман ачаш хĕвелĕм,
Ман пĕчĕкçĕ хĕвелĕм,
Пĕр чарăнми эс чĕвĕлтетрĕн.
Килсем тӳпене пĕр маншăн, терĕн.
Савсам пĕр мана эс чунран, терĕн.
Пăхас та теменччĕ сан çине.
Савас та теменччĕ эп сана.

Риссе те юлаймарӑм —
Сар хӗвел пултӑм тӑтӑм.
Сар хӗвел пулса килетӗп
Эп халь ирсерен тӳпене.
Ылтӑн сапатӑп пӗр шелсӗр
Савнӑ ҫӗрӗм ҫине.
Кӑмӑллӑн йӑл-йӑл ҫиҫетӗп.
Сана хам савнине
Эп вӑрттӑн систеретӗп.
Туту хӗрринче
Йӑлтӑр кулӑ пулса ирӗлетӗп.

* * *

Чупатӑп.
Чупатӑп.
Чупатӑп.
Ӳкетӗп.
Тӑратӑп.
Каллех чупатӑп.
Сана, аякра утаканскерне,
Чупса ҫитме тӑрӑшатӑп.
Акӑ ҫитрӗм чупса,
Тӑсрӑм аллӑма.
Сӗртӗнтӗм ҫеҫ сана,
Кайрӑм вӑранса.
Кашни каҫ
Пӗр тӗлӗк тӗлленет мана.
Кашни каҫ
Пӗр тӗлӗк канӑҫ памасть мана.
Тӗлӗкре те пулсан,
Эп ӗмӗте пурнӑҫласшӑн.
Тӗлӗкре те пулсан,
Санпа юнашар утасшӑн.
Каҫа кӗтсе, чӑтӑмсӑррӑн
Кун кунлатӑп.
Ҫывӑрма выртатӑп.
Тӗлӗкре каллех сана шыратӑп.
Инҫетре иртсе эс пыратӑн.

Пĕтĕм вăя пухса сан пата эп чупатăп.
Чупатăп. Чупатăп. Чупатăп.
Чупса çитетĕп.
Васкамасăр юнашар утатăп.
Кăмăл туллин çăмăллăн сывлатăп.
Телее ниçта шăнараймасăр,
Вăранса каятăп.
Тĕлĕкре те пулсан, ĕмĕте пурнăçлатăп.
...Унтан каллех кунĕпе
Чăтăмсăррăн тепĕр каçа кĕтетĕп.

* * *

Тӳлеккĕн,
Тутлă тĕлĕксем курса çывăракан
Мăн туччĕ эпĕ
Санпа тĕл пуличчен.

Çемçен,
Хăйăрлă çырана ыталакан
Тинĕс хумĕччĕ эпĕ
Санпа тĕл пуличчен.

Пĕр шухăшсăр,
Канлĕ пурăнакан хĕрччĕ эпĕ
Санпа тĕл пуличчен.

Тавраналла хĕм сапакан
Вулкан пултăм тăтăм
Санпа тĕл пулсан.

Çырана çапăнса арканакан
Кăпăклă хум пултăм тăтăм
Сана тĕл пулсан.

Пуçа ăçта кайса чикмеллине
Пĕлмен хĕр пултăм тăтăм
Сана тĕл пулсан.

* * *

Кӗлмӗҫ тетӗн-и?
Санран юрату
Мӗскӗнленсе йӑлӑнать тетӗн-и?
Ҫавӑнпа ман куҫсенчен
Шеллевлӗн пӑхатӑн-и?
Ҫук, эпӗ кӗлмӗҫ мар.
Эпӗ — пуян...
Пуянлӑхӑм — юратӑвӑм,
Тӑрӑ ҫӑлкуҫ евӗр
Чунӑмран иксӗлми тапса тӑрать.
Пуянлӑхӑм — юратӑвӑм
Сарӑ хӗвел евӗр
Ҫӗр-аннене ачашшӑн ҫупӑрлать.
Пуянлӑхӑм-юратӑвӑм
Йӑлтӑр ҫӑлтӑр евӗр
Мерченнӗн ҫӳл тӳпере ҫиҫет.
Савниҫӗм!
Эпӗ сан пата юрату ыйтма мар,
Юрату пама килтӗм.
Эсӗ те, ман пекех, пуян пултӑр, терӗм.

* * *

Пӗр пӗчӗк пӑнчӑ
Лартмалла манӑн
Пурнӑҫ хучӗ ҫине.
Пӗр пӗчӗк пӑнчӑ
Пӗтерӗ иккӗленӗве.
Пусарса асапланӑва
Парӗ канӑҫлӑх чӗрене.
Пӗр пӗчӗк пӑнчӑ...
Ҫак тӗнчене
Килмен эпир пулма пӗрле.
Утмалла пирӗн тӗрлӗ ҫулсемпе.
Чуна пусарса,
Чуна хытарса,
Хама хам тупа туса,

Пурнăç хучĕ çине
Хистетĕп пĕчĕк пăнчă лартма.
Анчах яланхилле
Çĕкленмест манăн алă.
Анчах яланхилле
Çĕнейместĕп хама.
Каллех яланхилле
Пĕчĕк пăнчă вырăнне
Пурнăç хучĕ çине
Лартатăп виçĕ пăнчă...

* * *

Çыран хĕрринче
Хĕвел шевлипе вылянса
Чупакан шыв юхăмĕпе
Чунтан киленетĕп.
Тăп-тăрă вăл.
Тĕпĕнче пĕчĕк чул таткисем
Тĕлли-паллисĕр выртаççĕ.
Ак, тамаша!
Кăн-кăвак тӳпе тĕслĕскерĕнче
Юн тумламĕсем курах кайрăм.
Вĕсем нумайлансах пыраççĕ.
Ах, шыв мар-çке,
Çук, шыв мар,
Юн, хĕп-хĕрлĕ юн юхать.
...Савăннипе шартах сиксе
Вăранса кайрăм.
Тĕлĕкре юн тумламĕсем тĕлленсен,
Тăвана е чун савнине часах курасса,
Теççĕ ватăсем халăхра.
Эх, телей!
Сана тĕл пуласса систерсе-ши
Тĕлленчĕ çак ырă тĕлĕк?

* * *

Темшĕн-çке паян ир-ирех
Çанталăк та хурлăхлă ман пекех.
Тунсăхлăн, куçне пăчăртаса,
Йĕрет-йĕрет вăл таталса,
Йĕпхӳ сапать йĕри-тавра.
Мăнтарăн! Сисет пулмалла
Эсĕ мана пăрахса
Тепринпе кайнине.
Эсĕ мана пурнăçра
Пĕччен хăварнине.

* * *

Шаннă йăвара кайăк çук,
Тесен тăшманусем сана,
Хурланса, тусăм, ан ус пуçна.
Эс ĕнен пĕр мана.
Эс шан пĕр мана.
Яланах йăвамра
Кайăкăм кĕтĕ сана.

* * *

Эх, каçсем еплеччĕ,
Сана тĕл пуличчен.
Сапатчĕ ярăм çутă
Сар уйăх тӳперен.
Çурт умĕнчи ват хурăн
Туртатчĕ кăчăк хăй патне,
Паратчĕ канлĕх чĕрене.
Тĕл пултăм та сана
Тем пулчĕ-çке мана.
Йăлт ӳкрĕм аптраса.
Те чăрсăр куçлă уйăх,
Те санăн çут сăну
Вăрларĕç ыйхăма,
Çухатрăм канăçа...

* * *

Сана юрас тесе,
Кăмăлна каяс тесе,
Хама савтарас тесе,
Мĕн анчах тумарăм,
Кам анчах пулмарăм.
Шăпчăк пек юрларăм,
Кушак пек ачашлантăм,
Кăвакарчăн пек кăлтăртатрăм,
Тилĕ пек чеелентĕм.
Пирĕштие çаврăнтăм.
Турă та пултăм.
Çук, мана пăхмарăн.
Çук, мана савмарăн.
Чунăмçăм, темерĕн.
Тепринпе вара
Усал çил пек кĕрлерĕм,
Çавăрттартăм,
Тустартăм.
Кашкăр пек уларăм,
Аслати пек авăтрăм,
Çавах, чунăм, терĕ.
Çавах, савни, терĕ.
Турă вырăнне хучĕ.
Ĕмĕр савма пулчĕ.
...Ĕнентĕм.
Чуна хытартăм.
Тепринпе кайрăм.

* * *

Эп теприне саватăп.
Ан çиллен.
Эп тепринпе каятăп.
Ан кӳрен.
Сăмахусем, ах, сивĕ-çке.
Сăмаххусем хăрушă-çке.
Сăмаххусем — юр пĕрчисем

Çăваççĕ чарăнми ман чунăмра.
Купан-купан пыраççĕ пухăнса.
Сана калас сăмахăма
Çăтатăп чыхăнса.
Сăмаххусем — юр куписем
Пырта лараççĕ капланса.
Чун кӳтнипе
Пăрнатăп та утатăп
Эп санран.
Унтан
Пĕр чарăнми чупатăп улăха,
Пĕр чарăнми йĕретĕп татăлса.
Сăмаххусем — юр пĕрчисем
Çутă тумлам пулса,
Юхаççĕ куçăмран шăрçан-шăрçан,
Çерем çине ӳкеççĕ çут ахах пулса.
Çĕр тĕпĕнчен тухаççĕ шăтарса,
Çĕршер çап-çут чечек пулса.
...Çав çут çеçкесенчен
Никам нихçан курман
Чечек çыххи туса,
Пуç кăшăлĕ çыхса,
Парнелĕп эп сан савнине туйра.

* * *

Пĕр вăхăтрах ик тĕнчере
Эпĕ пурăнатăп.
Пĕринче — хам хуçа.
Тепринче — шăпа.
Пĕринче çутă-çутă
Çуртсем купалатăп.
Вĕсене чĕнтĕрлесе эрешлетĕп.
Хĕл кунĕнче санпа
Çутă кӳлĕре кимĕпе ярăнатăп.
Кĕр кунĕнче санпа
Çурхи вăрманта
Уçăлса çӳретĕп,
Чечексем пуçтаратăп.

Сана никамран хăрамасăр,
Çынсен куçĕнчен пытанмасăр,
Чуптăватăп, ыталатăп.
Унта эсĕ пĕр манăн.
Унта чунпа канатăп.
Унта эп — патша майри.
Мĕн тăвас тетĕп,
Çавна тăватăп.
Унта эп хуçа.
Çав тĕнче вăл —
Ĕмĕт тĕнчи.
Тепринче вара — шăпам хуçа.
Ирсерен ĕçе васкатăп.
Пуçлăхсемпе вăрçатăп.
Черетре тăратăп.
Апат пĕçеретĕп.
Кĕпесем çăватăп.
Хăнасем пухатăп.
Кăлтăрмач пек çаврăнатăп.
Çак тĕнче вăл — пурнăç тĕнчи.
Унта шăпам хуçа.
Мĕн тăвас тет манпа,
Çавна тăвать,
Ирĕк ыйтса тăмасть.
...Юрать, ĕмĕт тĕнчи пур.
Юрать, ĕмĕт ĕнчи пур.
Пурнăç тĕнчинчен унта
Эп пытанатăп.
Унта эп хама шыратăп.
Унта эп сана тупатăп.
Пурнатăп-ха.
Пурнатăп...

# Вăхăт тумламĕ

* * *

Чун тăвăлса
килнĕ самантра,
Чĕрене хурлăх кукăр аллисемпе
Чăмăртаса тытсан,
Манăн ир-ирех, çара уран
Тин ӳкнĕ сывлăмлă курăк тăрăх утса
Çĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ
çĕре çитес килет.
Унта вĕçĕ-хĕррисĕр ирĕклĕх.
Унта кăн-кăвак пĕлĕт çинче
Кăп-кăпăшка кĕрен пĕлĕтсем.
Унта шăплăх тата
тĕлĕнмелле лăпкăлăх...

* * *

Ман куççулĕме эс нихçан курас çук,
Чĕрем ыратса сурнине эс нихçан пĕлес çук.
Сан умăнта эп хĕвел пек кулăп.
Сан çумăнта эп юрă юрлăп.
Ман куççуле минтер çеç курать,
Чĕрем куççульпе йĕнине сĕм каç çеç пĕлет.
Сан умăнта эп акăш пек шăвăп.
Сан çумăнта эп ташша ярăп.
Куççулĕме минтер çăтать.
Чĕрем суранне сĕм каç сиплет.

* * *

Манăн çепĕçлĕхĕм —
Кĕлчечек çеçкисене ирсерен чуптăвакан
Мерчен сывлăм пĕрчи.
Манăн юратăвăм —

Çурма тĕттĕмлĕ каçра çунакан кăвайтăн
Таçта çӳлелле вĕçекен хĕлхемĕ.

Манăн тунсăхăм —
Кĕркуннехи тӳпере ăшă енне вĕçекен
Тăрнан хурлăхлă сасси.

Манăн ыратăвăм —
Сунарçă аллипе вилмелле аманнă
Тискер кайăк йынăшăвĕ.
Саншăн...

* * *

Тепĕр чухне мана
Тӳперен çĕр çинелле мĕлтлетсе
Ӳкекен çиçĕмлĕ çăлтăр евĕр,
Шыв сикки пек хăвăртскер,
Вăхăт
Ман ăшра тĕвĕленнĕн туйăнать.
Вăл манăн юнран вăй илсе,
Эпĕ сывлакан сывлăшпа сывласа
Аталанать.
Ăна çуратма самант çитсен,
Вăхăт хуллен-хуллен
Юн тымарĕсемпе юхать.
Унтан сăваплă çеккунт — тумлам пулса,
Манăн пӳрне вĕçĕнчен
Çылăхлă çĕр çине тумлать.

* * *

Каясчĕ тӳпере сапаланса,
Пин-пин çутă тумлам пулса.
Ăшă çумăррăн
Чуптăвасчĕ çĕрĕме ачашласа.
Ĕмĕр ешертĕр вăл, савăнса.

Каясчĕ çĕр çинче сапаланса,
Пин-пин тырă пĕрчи пулса.

Çĕр пин пучаххăн
Пиçесчĕ хăвăрттăн тулса,
Чăмтăрччĕ выçлăх тĕпсĕр шăтăка.
Каясчĕ çынсем хушшинче сапаланса,
Пин-пин ырă сăмах пулса.
Кашнин чунне
Кĕресчĕ çирĕп вырнаçса,
Пурăнччăр шăкăл-шăкăл калаçса.

* * *

Хуп чӳречене!
Кама калаççĕ?
Хуп!
Мĕн тăратăн куçусене чарса?
Хуп!
Илтместĕн-им?
Хуп!
Мана сивĕ...
Хупрăм чӳречене,
Куратăн-и?
Хупрăм!
Мана та сивĕ...
Санăн ал-уру çеç шăнать,
Манăн вара — чун шăнать...

* * *

Миçе хут вĕçсе пынă çĕртен
Çĕр çине ӳксе,
Çĕнĕрен вăй илсе,
Тепĕр хут çӳл тӳпене вĕçсе хăпарма
Пӳрнĕ-ши мана пурăнан пурнăçра?

Миçе хут ăссăрла юратса,
Ним юлмиччен кĕлленсе çунса,
Çавах çĕнĕрен юрату юррине юрлама
Пӳрнĕ-ши мана пурăнан пурнăçра?

Миçе хут ĕмĕте çухатса,
Вилĕм хапхи умне çитсе,
Каялла çаврăнса утса,
Пурнăçа çĕнĕрен чунтан хаклама
Пӳрнĕ-ши мана пурăнан пурнăçра?

Кам ăна пĕлет?
Кам мана калать?
Никам та ăна пĕлмест.
Никам та мана калаймасть.

* * *

Ман чунра, ман чунра —
Эсĕ — вăрттăнлăх.
Ĕмĕтре, шухăшра —
Эсĕ — вăрттăнлăх.
Шăпамра, кун-çулта —
Эсĕ — вăрттăнлăх.
Парас çук нихăçан никама
Тупсăма эп уçса.
Пăрахсассăн эс пулма
Çын çинче — вăрттăнлăх.
Юлĕ тунсăх
Тĕнчере пурăнма.

* * *

Килме тӳр килчĕ пулсан
Çак çĕр çине,
Пурăнса irттересчĕ кун-çула çынла.
Шикленмесĕр,
Тĕм хыçне пытанмасăр,
Çын куçĕнчен мĕскĕннĕн пăхмасăр.

Тухма тӳр килчĕ пулсан,
Инçе çула,
Утасчĕ пуçа пĕкмесĕр.
Çул йывăррине пăхмасăр.
Çил-тăвăлтан пытанмасăр,

Ӳкме тӳр килчĕ пулсан
Тумхахлă çулра,
Тăрасчĕ тивĕçлĕхе çухатмасăр.
Талпăнасчĕ малалла хăрамасăр.
Пурнăçа кусран тӳррĕн пăхса.

* * *

Чупать.
Пĕр чарăнмасăр,
Каялла çаврăнса пăхмасăр,
Хăй еккипех
Чупать
Вăхăт.
Улма чăпар ут евĕр
Пĕр ĕрĕхтерсе,
Пĕр кĕçенсе,
Пĕр тулхăрса,
Пĕр такăнса
Васкать-васкать
Вăл малалла.
Чупса пыракан
Вăхăт-ут
Урисем айĕнчен
Çеккунтсем,
Минутсем,
Сехетсем,
Пĕчĕк тăпра муклашкисем пек,
Сирпĕне-сирпĕне юлаççĕ,
Çĕр çине лаплатса ӳкеççĕ.
Сыпăкăн-сыпăкăн
Саланса каяççĕ.
Çав тĕпренчĕксене
Алăпа асăрханса пуçтаратăп.
Кашни тĕпренчĕке сăнаса пăхатăп.
Кашни тĕпренчĕке хакласа виçетĕп.
Кашни тĕпренчĕке чунăмпа туятăп.
Кашни тĕпренчĕке перекетлĕн енчĕке тултаратăп.
Çав тĕпренчĕксенчен манăн шăпам пуçтарăнать.
Çав тĕпренчĕксенчен пурнăçăм тытăнса тăрать.

* * *

Чи таса та
Чи сăваплă
Вырăн ҫак ҫĕр ҫинче —
Чиркÿ.
Ҫынсем унта кĕл тума ҫÿреҫҫĕ.
Вилнисене асăнса ҫурта ҫутаҫҫĕ,
Турăпа чунĕсене уҫса калаҫаҫҫĕ.
Унран пулăшу ыйтаҫҫĕ.
Чунĕсене ҫăмăллатаҫҫĕ,
Кăмăлĕсене ҫырлахтараҫҫĕ.
Турра чунтан ĕненекенсем
Телейне чиркÿре тупаҫҫĕ.
Эпĕ турра ĕненместĕп.
Анчах та ман валли те
Ҫак тĕнчере
Чи таса та
Чи сăваплă
Вырăн пур.
Ҫав чиркÿ вăл — эсĕ.

* * *

Эй, турăҫăм!
Тĕнче уҫлăхĕнчи
Мăнаҫлă турăҫăм!
Пурне те пултаракан,
Пурне те пĕлекен,
Пурне те куракан
Аслă турăҫăм.
Ăҫтан тупас ман
Ҫавăн чухлĕ вăй
Ăна манма,
Асапран хăтăлма?
Эй, турăҫăм!
Ан пул хыт кукар.
Парсам мана иксĕлми вăй
Ăна манма,

Асапран хăтăлма?
Эй, турăçăм!
Мăнаçлă турăçăм.
Сана кĕл тăватăп,
Сана пуççапатăп.
Анчах
Эсĕ чĕнместĕн.
Мĕншĕн тесен,
Эсĕ те пĕлместĕн...
Эй, турăçăм!
Хăватлă турăçăм!
Юрату асамĕ умĕнче
Эсĕ те — вăйсăр!

* * *

Пурнăç мĕн вăл, тесе
Ан ыйт манран.
Хăв пурăнса курмасăр,
Пурнăç тутине пĕлес çук эс нихçан.

Юрату мĕн вăл, тесе
Ан ыйт манран.
Хăв юратса курмасăр,
Юрату кăварне пĕлес çук эс нихçан.

Савăнăç мĕн вăл, тесе
Ан ыйт манран.
Хăв савăнса курмасăр,
Савăнăç хăватне пĕлес çук эс нихçан.

Хурлăх мĕн вăл, тесе
Ан ыйт манран.
Хăв хурланса курмасăр,
Хурлăх йӳççине пĕлес çук эс нихçан.

Телей мĕн вăл, тесе
Ан ыйт манран.
Хăв талайна курмасăр,

Телей
Тупсăмне пĕлес çук эс нихçан.

Çавах калас килет сана юлашкинчен:
Пурăн.
Юрат.
Савăн.
Хурлан.
Çакă вăл — телей.

* * *

Эй, арçын!
Мана, Хĕрарăма,
Турă сан аяк пĕрчинчен
Тунă тенине ан ĕнен.
Çавăнпа та ман умра
Ан курнăçлан.
Ан пуçтахлан...
Эпĕ — Хĕрарăм —
Çут тĕнчен ĕмĕрхи вăрттăнлăхĕ.
Çутçанталăк
Хăйĕн ылтăн аллисемпе,
Ăста скульптор евĕр,
Ӳркенмесĕр йăваларĕ мана.
Унтан тăхăрвун тăхăр тĕслĕ
Асамлă курăк илсе
Хурана пăрахрĕ.
Асамлă сăмахсем пăшăлтатрĕ.
Пăтратрĕ,
Вĕретрĕ...
Мана çав шывпа пуç тӳпинчен пуçласа
Ура тĕпне çитиччен сапрĕ,
Юлашки тумламĕсене ĕçтерсе ячĕ.
Вара сан умăнта ялан çиçме
Манра хĕвел хĕмне çутрĕ.
Сан умăнта вăйлăн курăнма
Арăслан вăйне пачĕ.
Сана улталама

Тилĕ чеелĕхне пачĕ.
Санăн пуçна çавăрма,
Санăн чунна илĕртме
Вутăш сассине пачĕ.
Сан умăнта мăнаçлăн курăнма
Ăмăрткайăк мăнаçлăхне пачĕ.
Сан умăнта çăмăлттайлăн курăнма
Лĕпĕш вĕлтĕртетĕвне пачĕ.
Мана чун вĕрсе кĕртнĕ вăхăтра
Эсĕ илтмелле мар хăлхамран
Вăрттăн сăмах пăшăлтатрĕ.
Эй, арçын! Çĕмĕр кăштах пуçна,
Тен, тупăн унăн тупсăмне эс шутласа...

* * *

Эсĕ — Алам.
Эпĕ — санăн Еву.
Ман алă тупанĕ çинче
Куçа йăмăхтаракан,
Витĕр курăнакан,
Сипетлĕ,
Техĕмлĕ
Хĕп-хĕрлĕ
Панулми.
Еплерех илĕртӳллĕ вăл.
Еплерех тутлă вăл.
Тутанса курас килет-и?
Тыт, Адам.
Çырт, Адам.
Ан хăра, Адам.
Эпĕ тутанса пăхрăм ăна.
Ытла та тутлă-çке вăл!
Юрату турри умĕнче
Кĕрер çылăха.
Ырă мĕнне,
Усал мĕнне
Илер чунпа ăнланса.
Çăтмах алăкне яр! уçар!

Тыткăнран ирĕке атя тарар.
Каяр çĕр çине пурăнма.
Савăнма, кулянма —
Йăхăмăра малалла тăсма.

* * *

Телейлĕ пулма çуралтăм
Çак тĕнчене.
Анчах телей валеçнĕ чух
Эп пулман çав килте.

Илемлĕ пулма çуралтăм
Çак тĕнчене.
Анчах илем валеçнĕ чух
Эп пулман çав килте.

Савăнса пурăнма çуралтăм
Çак тĕнчене.
Анчах савăнăç валеçнĕ чух
Эп пулман çав килте.

Юратса пурăнма çуралтăм
Çак тĕнчене.
Анчах юрату валеçнĕ чух
Эп пулман çав килте.

Ах, пĕлмен çав кутамккапа
Шăпам çӳренине.
Пĕлнĕ пулсан, ларăттăм
Ниçта тухмасăр пӳртре...

* * *

Нумай та кирлĕ мар мана,
Пĕр сив сăмах калаççĕ те.
Тăм ӳкнĕ çурхи çеçке пек,
Шанатăп эп, пĕкетĕп пуçа.

Нумай та кирлĕ мар мана,
Пĕр ăш сăмах калаççĕ те,
Хура пĕлĕт хыçĕнчен хĕвел пек,
Тухатăп шуса, çиçетĕп кулса.

Нумай та кирлĕ мар мана,
Эс юнашар пул та, ăнлан мана.
Пурнăп вара сана шанса,
Çĕн куна кĕтсе, пурнăça савса.

* * *

Тахçан
Эпĕ пĕр хăрамасăрах
Юрату авăрне сикме хатĕрччĕ.
Тахçан
Эпĕ шутласа тăмасăрах
Саншăн пурнăçа пама хатĕрччĕ.
Тахçан
Эп сан умăнта ачалла
Курăнма вăтанмастăмччĕ.
Тахçан
Пĕр сана çеç юратнине
Çут тĕнче илтмеллех кăшкăрма хатĕрччĕ.
Тахçан..
Мĕнле кăна пулман пуль тахçан...
Халĕ вара
Мĕн пулчĕ-ши мана?
Тахçанхи вăхăта аса çеç илсен
Ăшăмра хамран хам именетĕп.
Çĕр айне анса кайма та хатĕр.
Ватăлтăм-ши?
Е çулсем иртнĕçем ăслăлантăм?

Мĕн тăвас тетĕн,
Вăхăт хăйĕннех тăвать:
Аркатать, манăçтарать.
Пĕтĕмпех пăтраштарать.

Пĕр вырăнта тăмасть.
Шăвать те шăвать...

* * *

Ах, йывăр-çке çак тĕнчере пурăнма.
Ах, йывăр-çке çак çĕр çинче çын пулма.

Кĕркунне
пуласчĕ ман хĕрлĕ çулçăллă вĕрене,
ларасчĕ пĕр шухăшсăр шĕпĕлтетсе
аслă çул хĕрринче.

Хĕлле
пуласчĕ ман вĕлтĕрти юр пĕрчи,
пĕр кулянмасăр, çăмăлттай,
вĕçесчĕ çиле май пĕрехмай.

Çуркунне
пуласчĕ ман юртан çуралнă шыв юххи,
чупасчĕ сиккелесе шăкăлти-шăкăлти
урампала çырманалла шăнкăрти.

Çулла
пуласчĕ ман шăнкрав курăкĕ,
манасчĕ хурлăх мĕнне,
ларасчĕ улăхра чӳхенсе.
Ах, йывăр-çке тĕнчере пурăнма.
Ах, йывăр-çке çак çĕр çинче çын пулма.

* * *

Пурнăç çулĕ — ансăр çул.
Ансăр çулĕ — кукăр çул.
Кукăр çулĕ — чуллă çул.
Чуллă çулĕ — йывăр çул.
Йывăр çулĕ — чикĕсĕр...
Вĕçĕ-хĕрри ăçта-ши?

* * *

Пĕтĕм тĕнче ахăлтатса кулнă чух
Эп çеç, пĕчĕк ача пек,
Ик аллăмпа пите хупларăм та,
Тăтăм йĕрсе.

Пĕтĕм тĕнче чунтан савăннă чух
Эп çеç, кайăк чĕппи пек,
Çунатăмсене усрăм та,
Тăтăм хурланса.

Пĕтĕм тĕнче хăпартланса юрланă чух
Эп çеç, пĕччен хĕлĕх пек,
Пĕр сас кăлармасăр,
Тăтăм янрамасăр.

Пĕтĕм тĕнче хĕмленсе çуннă чух
Эп çеç, вăйсăр çăлтăр пек,
Таврана çутатаймасăр,
Тăтăм мĕлтлетсе.

Пĕтĕм тĕнче кулнă чухне
Эп йĕнине никам та сисмерĕ.
Пĕтĕм тĕнче савăннă чух
Эп хурланнине никам та асăрхамарĕ.
Пĕтĕм тĕнче юрланă чухне
Эп янраманнине никам та илтмерĕ.
Пĕтĕм тĕнче хĕмленнĕ чухне
Эп мĕлтлетнине никам та курмарĕ...

## ПĔЧЧЕНЛĔХ

Чартакри пӳлĕм.
Ăшă çил сĕртĕннипе
Ерипен вĕлкĕшекен
Чĕнтĕрлĕ чӳрече каррисем.
Тунсăхлă пĕлĕтсемпе
Карса илнĕ тĕксĕм тӳпе.

Кантăка хуллен шаккакан
Çумăрăн шултра тумламĕсем.
Çăмха пек хутланса выртнă
Кушак çури евĕр
Çемçе креслăра эпĕ.
Манăн хулпуççи çинче
Шăтăклă шаль тутăр ..

* * *

Пурнăç вăл — ринг.
Эпĕ — кĕрешӳçĕ.
Эй, шăпам!
Çитет сана
Вăрттăн мана
Хыçалтан çапма.
Эпĕ сана уççăн
Тӳрреммĕн кĕрешĕве йыхратăп.
Çап мана, тăлла, лăска.
Ӳкер çапса.
Эп çавах тăрăп сиксе.
Мĕскĕннĕн усмăп пуçа
Сан умăнта.
Енчен те кĕрешӳре
Сĕнтерсен эс мана,
Çĕр-аннен сĕткенне ĕçсе,
Вăй пухса,
Тăрăп каллех хăюллăн сиксе.
Кĕрешӳре çирĕпленнĕ
Мăшăр çунатăма
Ярăп сарса.
Вĕçĕп ирĕклĕ уçлăха
Тулли кăкăрпа çăмăллăн сывласа.
Эй, шăпам!
Эс мана çĕнĕрен
Кĕрешĕвре çĕнме
Вăй пухнă вăхăтра,
Ирĕклĕх симпылне.
Пĕтĕм чунпа туйса,
Ĕçĕп эп антăхса...

## ЧĂВАШЬЕНШĔН ТУНСĂХЛАНИ

Санран,
Пин те пин çухрăмра,
Аякра,
Узбек çĕрĕ çинче,
Тăван енĕм,
Ытарайми Чăвашьенĕм,
Эпĕ — тымарĕнчен касса,
Кăкшăма хитрелĕхшĕн
Лартнă йĕплĕ шăлан.
Шыва пылаклатнă,
Çавах кунран-кун
Йĕплĕ шăлан типсе шанать.
Пуçне пĕкет.
Çеçки хуллен куштăрхать.
Сип-симĕс çулçисем
Ерипен типсе сарăхаççĕ.
Йĕплĕ шăланăн
Кăтăркас йĕппписем çеç,
Асамлăха кĕтекенскерсем,
Нихçанхинчен те мăнаçлăн курăнаççĕ.

* * *

«Эс чиперленнĕ»,— теççĕ хĕр-туссем.
«Эс хитреленнĕ»,— теççĕ тантăшсем.
«Хĕвелпи-и парнелерĕ хăйĕн çут сăнне?
Каласам?» — тееççĕ пĕрисем.
«Çăлтăрпи-и çăлтăр çутрĕ сан куçусенче?
Пĕлтерсем?» — тееççĕ теприсем.
Эх, тусăмсем,
Хĕр-тантăшсем!
Вăрттăнлăхăм пит ансат.
Юрату-çке, юрату,
Асамлăскер,
Хăватлăскер
Улăштарчĕ сăнăма.
Хĕм саптарать куçăма.

* * *

Чирлерĕм.
Кăмăл пăтранать.
Хăстарать.
Пуç ик енчен хĕссе ыратать.
Чирлерĕм.
Ура ураран иртет аран.
Çĕр çаврăнса тарать айран.
Чирлерĕм.
Ёнер каç тĕлĕкре
Сап-сарă çӳçлĕ,
Кăн-кăвак куçлă
Пĕчĕк ачана
Кăкăр çумне ачашласа пăчăртарăм.
Чĕрке çинче сиктерсе вылятрăм.
Пĕчĕк ачана тĕлĕкре
Хыт савсан, чирлессе, тетчĕ асанне.

* * *

Ман сассăм вĕçтĕр
Ян та ян,
Ялсемпе хуласем,
Юханшывсемпе тинĕссем,
Утравсемпе çĕрсем çийĕн,
Тăван енĕм,
Чăвашьенĕм çийĕн
Хастаррăн,
Хăюллăн,
Ирĕклĕн.
Çиттĕр вăл вĕçсе тĕнче вĕçне
Эп пурри çинчен пурне те пĕлтерсе.
Эп чĕнетĕп, эп йытатăп,
Тархаслатăп, йăлăнатăп.
Эй, çынсем.
Пурнар килĕштерсе,
Пĕр-пĕрне чунтан хисеплесе.
Эй, çынсем.

Пурнар усăллăн, кăмăллăн,
Хаваслăн та савăккăн.
Пĕр-пĕрне сунар ырлăх,
Телей, çирĕп сывлăх.
Ултава, кĕвĕçĕве,
Усала, хирĕçĕве
Тĕп тăвар ĕмĕрлĕхе.
Эй, çынсем!
Çут тĕнчене пĕрре килетпĕр,
Çĕр çинче пĕрре пурнатпăр,
Сар хĕвеле пĕрре саватпăр,
Чун туличчен пĕрре сывлатпăр.
Эй, çынсем!
Илтсемĕр ман сасса.
Чĕнем сире тăвансем, тесе.
Тăванран çывăххи никам та çук.
Тăванран хакли ниçта çук.
Алла-аллăн тытăнса,
Йăл кулса,
Пуçа çӳллĕ çĕклесе,
Утар пĕр пулса,
Йывăрлăха çĕнтерсе
Утар малашлăха,
Утар пуласлăха.
Лартар ӳркенмесĕр
Асаплă çĕрĕмĕр çинче улмуççисем.
Шурă-шурă пахча ӳстерер,
Леш тĕнчере мар,
Ку тĕнчере çăтмах тăвар.
Эй, сассăм!
Чăваш ачин сасси.
Янăра вăйлăрах,
Хăватлăрах,
Çирĕпрех.
Вĕç ирĕклĕ кайкăррăн
Савнă çĕрĕм,
Чăваш çĕрĕм çийĕн
Ян та ян.

* * *

Ахăрать тĕнче.
Тулашать тĕнче.
Хĕвĕшет тĕнче.
Çынсем, тĕмĕри кăткăсем пек
Унталла-кунталла чупкалаççĕ.
Кĕтесĕсене мулпа тултараççĕ.
Çынсем кĕтӳççĕр кĕтӳ пек
Малалла тĕлли-паллисĕр ыткăнаççĕ.
Çереме çĕрпе танлаштараççĕ.
Çынсем, выçăхнă кашкăрсем пек
Пĕр-пĕрин çине ыткăнаççĕ.
Пĕр-пĕрне мăйран пăваççĕ.
Тулхăрать тĕнче.
Алхасать тĕнче.
Урать тĕнче.
Темле вăй тĕнчене
Çавăрнă тейĕн тӳнтерле.

**КĔТНИ**

Ман чĕре айĕнче
Чăтăмсăррăн кĕтекен
Çĕнĕ пурнăç
Аталанать.
Ман чĕре айĕнчи
Çĕнĕ пурнăç,
Кунран кун ӳссе,
Вăй пухать.
Ман чĕре айĕнчи
Çĕнĕ пурнăç,
Хăй чĕррине систерсе,
Тăпăлтатать.
Анне пулма эс хатĕр-и?
Мана кĕтетĕн-и?
Кĕтетĕн-и, тесе
Тук-тук! шаккать.
Ман чĕре айĕнчи

Çĕнĕ пурнăç
Çивĕч сассипе
Çĕн куна
Саламламаваскать.

* * *

Тăван килтен аякра,
Ют хулара,
Ют çынсем хушшинче
Эп пĕччен.
Аннеçĕм, эс инçетре...
Шухăшăмпа çеç ыталатăп сана.
Шухăшăмпа çеç ачашлатăп сана.
Аннеçĕм, аякра сансăр йывăр мана.
Çивĕч шăлĕсемпе тунсăх кăшлать чуна.
Хурçă пичет евĕр хурлăх выртать ăшра.
Никам ăнланмасть мана.
Никам йăпатмасть мана.
Çур сăмахран ăнланакан аннеçĕм,
Эс çук çумра.
Пуçран шăлса йăпатакан аннеçĕм,
Эс çук çумра.
Ыр сăмах калакан аннеçĕм,
Эс çук çумра.
Тĕрĕс сĕнӳ паракан аннеçĕм,
Эс çук çумра.
Пин çухрăм ытла пирĕн хушăра.
Çавна пула калаçатăп санпа ăшăмра.
Çепĕç сăмахсем шыратăп ятарлаçа:
Аннеçĕм, çывăх çыннăм, çутă ахахăм,
Пăшăлтататăп шăппăн-шăппăн.
Анне сăмах чи ăшă сăмах.
Анне сăмах чи хаклă сăмах.
Анне сăмах чи ытарлă сăмах.
Анне сăмах сăваплă сăмах.
Анне сăмах халь анне вырăнне
Мана ыталать, йăпатать,

Пуçăмран шăлать, кăмăла уçать.
Ыранхи куна ĕненме хушать.
Аннеçĕм, ют хулара,
Тăван килтен аякра,
Ют çынсем хушшинче
Эп халь пĕччен мар,
Эп САНПА...

* * *

Аннем,
Çĕр патне çитиччен
Тайма пуç сана.
Мана çак тĕнчене
Çуратнăшăн хĕрача туса.
Сана пула,
Эпĕ çутçанталăкăн чи сăваплă
Вăрттăнлăхне пĕлтĕм.
Пурнăç мĕнле тĕвĕленнине туйрăм.
Эпĕ — Хĕрарăм.
Эпĕ — Хĕрарăм тура.
Манăн сылтăм алăра пурнăç.
Манăн сулахай алăра вилĕм.
Пулас пурнăçа
Вĕлерес тесен — вĕлеретĕп.
Пулас пурнăçа
Кун çути кăтартас тесен — кăтартатăп.
Ку — ман ирĕк.
Анчах, сан пекех, аннеçĕм,
Эп çутçанталăк панă
Чи пысăк тивĕçе пурнăçларăм.
Çут тĕнчене хĕрача çуратрăм.
Вăл та, санпа ман пекех,
Çутçанталăкăн чи сăваплă вăрттăнлăхне
пĕлтĕр.
Амалăхра пулас пурнăç мĕнле тĕвĕленнине
туйтăр.
Çынсен йăхĕн хĕмленсе çунакан вучахне,

Нихçан ан сӳнтĕр, тесе
Çĕнĕ пурнăç пăрахтăр.
Çак тĕнчене хĕрача çураттăр.

* * *

Шалт! хупăнчĕ алăк умра.
Шак-шак!— шаккарăм эп ăна,
Уçма ыйтса.
Юман алăк
Чĕмсĕррĕн
Тăрать пăхса.
Кăмăл пăсăккине,
Чĕрем сурнине,
Чуна çăмăллатса,
Парасшăнччĕ сана каласа.
Çук, уçмарăн.
Кĕресшĕнччĕ,
Кĕртмерĕн...
Пурнăç асапĕпе
Тăрăнса ӳкмерĕм,
Пуçăм пĕтрĕ-çке, тесе,
Пăшăрханса, чуна çурмарăм.
Çут тĕнчере
Ырă çынсем пуррине
Асра тытса,
Тепĕр алăкран
Пырса шаккасшăн.
Уçса кĕртĕç-ши?

* * *

Эп çак çут тĕнчене юратма килнĕ.
Сана, аннеçĕм.

Эп çак çут тĕнчене юратма килнĕ.
Сана, аттеçĕм.

Эп çак çут тĕнчене юратма килнĕ.
Сана, савниçĕм.

Эп çак çут тĕнчене юратма килнĕ.
Сана, хĕрĕм.

Эп çак çут тĕнчене юратма килнĕ.
Сана, ывăлăм.

Эп çак çут тĕнчене юратма килнĕ.
Сире, тăвансем.

Эп çак çут тĕнчене юратма килнĕ.
Сире, çынсем.

Сире пурне те ман йыхрав:
Пурнар пĕр-пĕрне юратса,
Пурнар ырлăх-сывлăх сунса.

## Çурта ташши...

Тĕттĕм каç. Пӳлĕм. Сĕтел çинче пĕччен çурта çунать. Унăн хĕлхемĕ эпĕ тата эсĕ сывласа кăларакан сывлăш хумĕпе пĕрре сулахаялла, тепре сылтăмалла тайăлать. Çурта çутти малтан санăн сăнна çутатса илет, кайран — манăнне. Мĕлтлете-мĕлтлете çунать çурта. Ун йĕри-тавра çавра мĕлке хуллен хумхана-хумхана ташлать те ташлать. Радиоран илемлĕ кĕвĕ шăппăн илтĕнет. Эсĕ пуçна уснă та темĕн çинчен шухăшлатăн. Туту хĕрринче салху кулă пытаннă. Акă, эсĕ пуçна çĕклерĕн, мана тилмĕрсе пăхрăн. Куçăм санăн куçупа тĕл пулчĕ.Именсе, хăюсăррăн тинкертĕм сип-симĕскерсене. Хам та сисмерĕм, тарăн авăра путрăм. Мана тутлă-тутлă. Калама çук ырă-ырă. Ăшăмра, юнăмра пылак-пылак туйăм вылянать. Эпĕ пĕр иккĕленмесĕрех çав авăрта путса вилме те хатĕр халь.

Çунать, хĕмленсе-хĕмленсе çунать çурта. Унăн хĕлхемĕ юрла-юрла ташлать çурта çийĕн...

Эпĕ сан куçна тĕмсĕлсе пăхатăп. Çак самантра сана çеç савнине, саншăн çеç пурăннине пĕр сăмахсăр систе-

ретĕп. Туту хĕрри ерипен туртăнса илет, салху кулă вырăнне чуна илĕртекен, антăхтарса яракан ачаш кулă çиçме пуçлать.

Иксĕмĕр валли анчах çунать çурта. Пӳлĕмре шăппăн илтĕнекен кĕвĕ те пирĕншĕн çеç. Чунăмсем çав хумĕсенче чӳхенсе, пĕр-пĕрне хавaслăн хăваласа ишеççĕ, пĕрпĕрин çумне çепĕççĕн сĕртĕнеççĕ, хĕрӳллĕн ыталанаççĕ. Эсĕ мана юратса-юратса пăхатăн. Иксĕмĕртен телейлĕ çын пур-ши çак самантра çылăхлă çĕр çинче? Виçепе виçейми телей тапса тăрать пирĕн чĕресенче. Санăн сипсимĕс куçу черчен чуну пекех тап-таса, унта канăçлăхпа лăпкăлăх...

Сасартăк сан куçусем тĕксĕмленчĕç, кăн-кăвак тӳпене хуп-хура пĕлĕтсем карса илчĕç тейĕн, темле ăнланмалла мар çутăпа çуталса илчĕç. Эсĕ куç хупаххисене хупрăн та... санăн чуну таçта тарса пытанчĕ. Кĕлеткӳ çеç халь ман куç ытамĕнче, чуну вара — таçта аякра-аякра, çын шыраса тупайми вырăнта. Чĕреме тимĕр хĕскĕчĕпе çурмалла касрĕç тейĕн. Вăл чăтма çук хыттăн ыратса кайрĕ. Эпĕ ĕмĕт тĕнчинчен çылăхлă çĕр çине таврăнтăм та, радиоран тĕлĕнмелле илемлĕ, çемçе сасăллă хĕрарăм юрланине илтрĕм. Тĕнчипе паллă юрăçă ют чĕлхепе шăрантарать. Халь сана хĕрарăмăн хитре сасси çеç илĕртрĕ, çырлахтарчĕ. Чуну, ахăртнех, çак самантра шур акăш евĕр тӳлеккĕн вылянса выртакан тинĕс хумĕсем çиййĕн çăмăллăн ишрĕ. Çунаттисемпе çатлаттара-çатлаттара пинпин шыв тумламĕсене сарă хĕвеле парнелерĕ, ахах-мерченĕн çуталса илекенскерсем çине пăхса киленчĕ...

...Çук, сана хамран тартас килмерĕ манăн. Тепĕр хĕрарăма парас килмерĕ. Эпĕ пӳрнесемпе аллуна сĕртĕнтĕм, ачашларăм, пӳрнӳ вĕçĕсене чуптурăм. Хам юнашаррине систертĕм. Эсĕ çавах хĕрарăм-юрăçăн илĕртӳллĕ сассин тыткăнĕнчен хăтăлаймарăн. Мĕн туйрăн-ши эсĕ çак вăхăтра? Ют чĕлхепе, пĕр сăмах та ăнланмалла мар юрларĕ вĕт-ха хĕрарăм. Тупсăма тупаяс çук эп. Эсĕ çеç пĕлекен темĕнле асамлăх пулчĕ пуль çепĕç сасăра. Эпĕ çавах вăл хĕрарăма кĕвĕçместĕп, мĕншĕнне вара хам та калаймастăп.

Акă сасă ерипен кĕвĕ çеммипе пĕр пулса, шăппăн лăпланчĕ.

Эсĕ куç хупаххисене уçрăн, каллех чуну куçăм ытамне кĕрсе ӳкрĕ. Тавах, турра. Эсĕ каллех манăн, манăн, мана кăна саватăн, пĕр маншăн çеç пурăнатăн!

...Сĕтел çинче пĕччен çурта çунать. Хурлансан, куçран пăчăртанса тухакан вĕри, йӳçĕ куççуль евĕр тумлать турилкке çине çурта тумламĕ.

Эсĕ тата эпĕ сывласа кăларакан сывлăш хумĕпе авкаланса, чӳхенсе мĕлтлете-мĕлтлете ташлать хĕлхем...

## Кĕрхи симĕс çулçă

Эсĕ манăн кĕрхи симĕс çулçă, терĕн. Çапла. Эпĕ санăн кĕрхи симĕс çулçу. Сан пурнăçунти юлашки симĕс çулçă. Эпĕ кĕрхи вăрманти кĕрхи хĕвел хĕрӳллĕхне ĕненсе, çут тĕнче илемĕпе киленсе йăпанма тата ăнсăртран сана курайăп-ши, тесе папкаран кĕркунне çуралса тухнăскер. Çапла. Кĕрхи вăрманта пĕччен турат çинче кассăн-кассăн килсе çапакан сивĕ çилпе тăлăххăн тавлашса вĕлтĕртетекен черчен сип-симĕс çулçă.

Анчах кĕрхи хĕвел ăшши ултавлă. Тин çеç вĕрискер, вăл часах хевтине çухатĕ те салхулланĕ. Кĕрхи тĕксĕм пĕлĕтсем хыçне кĕрсе пытанĕ. Вара санăн кĕрхи симĕс çулçу хура вăрманта тăр-пĕччен тăрса юлĕ, хаяр хĕле вĕлтĕр-вĕлтĕр чӳхенсе кĕтсе илĕ. Унăн сивĕ ытамне кĕрсе ӳкĕ, хутланса пĕрĕнĕ.

Санăн кĕрхи симĕс çулçу кĕрхи вăрманти кĕрхи хĕвел хĕрӳллĕхне санра шырать. Хăвăн хӳтлĕхне илĕн-ши эсĕ ăна? Кĕрхи хура вăрманта пĕччен пăрахса хăвармăн-ши?

## Пĕрремĕш юр

Тинех йĕпе-сапаллă кĕркуннене çĕнтерсе хĕл ларчĕ çĕр çине. Паян пĕрремĕш кун хуллен-хуллен çăвать шур юр. Юр пĕрчисем — шур лĕпĕшсем, ирĕклĕхе савса, йĕритавра вĕçеççĕ ярăнса. Вĕçе-вĕçе ывăннă хыççăн лараççĕ

йывăçсем çине канма. Шап-шур пĕркенчĕкпе витеççĕ вĕсене. Чăлт шур пĕркенчĕк айĕнчи хырсем — качча кайма пуçтарăннă хĕрсем. Вăтанчăклăн тартаççĕ айккине куçĕсене мăнаçлă та кĕрнек каччисенчен-юмансенчен. Тĕмсем выляççĕ пытанмалла пĕр-пĕринчен. Шап-шур пĕркенчĕкпе витĕнеççĕ те, туп эс халь вĕсене: те юр купи сан умăнта, те шур сухаллă юр мучи.

Ах, мĕн тери илемлĕ-çке паян тĕнче. Анчах та çак хитрелĕхе эс курас çук нихçан манпа пĕрле. Асамлă шăплăха та эс итлеймĕн манпа пĕрле халь тилмĕрсе. Юр пĕрчисем — шур лĕпĕшсем вĕçеççĕ ман тавра ташла-ташла, манран-ши именсе, ӳкеççĕ айккине, шап-шур пĕркенчĕкпе витеççĕ çĕр питне.

Утатăп эп пĕччен хула урамĕпе, пĕрремĕш юр илемĕпе чунтан киленсе. Пĕр эпĕ çеç нихçан та пулас çук шап-шур пĕркенчĕк тăхăннă пике. Пĕр эпĕ нихăçан та утас çук санпа пĕрле, пĕр çулпа. Эс инçетре, эс тепринпе...

## Çиччĕ виç те пĕрре кас

Пĕр хĕвеллĕ çуллахи кун ялта ырă хыпар çиçĕм евĕр хăвăрт сарăлчĕ: паян хăнана Ухтерккепе Мухтерkke килеççĕ.

Часах урамра тусан мăкăрлантарса автобус килни курăнчĕ. Вăл ял варринчи Культура керменĕ умĕнче чарăнчĕ. Халăх питĕ нумаййине пула спектакле урамра, волейбол площадкинче ирттерме йышăнчĕç. Автомашина кузовĕ сцена вырăнне пулчĕ. Кам мĕнле пултарнă, çавăн пек вырнаçса ларчĕç куракансем. Пĕрисем тăраççĕ, теприсем килтен хăйсемпе пĕрле пукансем илсе килнĕ. Ача-пăча — çывăхри йывăçсен турачĕсем çинче.

Эх, пуçларĕç Ухтерккепе Мухтерkke ял халăхне култарма. Саппунсем çакса, тутăрсем çыхса тухнă тата хăйсем. Йĕплеççĕ çеç: суту-илӳре ĕçлекенсене — вăрттăн тавар сутнăшăн, хăшпĕрисене — аншарли юхтарнăшăн, теприсене — йĕркелĕхе пăснăшăн. Ял халăхĕ варне тытса кулать. Савăнтарса хăварчĕç артистсем. Ухтерккепе Мухтерkke кайсан та нумайччен аса илсе пурăнчĕ вĕсене ял халăхĕ.

Çакăн хыççăн манăн пуçра пĕр интереслĕ шухăш çуралчĕ: «Мĕнрен кая-ха эпĕ Ухтерккепе Мухтерккерен?»

Тăрăхлама камран пуçлам-ши? Манăн чи çывăх юлташ Коля пур. Яланах пĕрле эпир унпа. Вĕренӳре ĕлкĕрсе пыма пулăшать вăл мана. Хăй вара «пиллĕк» паллăсемпе çеç вĕренет. Вăрмана кăмпа, çырла пухма чупатпăр пĕрле. Ăман пухса пулла çӳретпĕр. Тем çинчен те ĕмĕтленетпĕр. Космонавт, разведчик пулса вылятпăр.

Паян та ман пата Коля килчĕ. Ун çине пăхрăм та лĕхлĕх кулса ятăм.

— Мĕн пулчĕ? — тĕлĕнсе ыйтрĕ вăл.

— Итле-ха,— пӳрнепе тĕллерĕм ун çине.— Сăна-ха хăвна. Çичĕ çын валлилĕх сăмсу пĕр сана çеç лекнĕ вĕт?..

Коля кĕтменнипе шанках хытса кайрĕ. Ман çине тĕлĕнсе пăхрĕ. Сăмахсене ĕненмесĕр, сăмсине аллипе хыпаларĕ. Ун пек, кун пек пăркаларĕ ăна тĕкĕр умĕнче. Унтан, пĕр сăмах чĕнмесĕр, алăка ерипен уçрĕ те пӳртрен тухса кайрĕ. Ахăлтатса кулнă çĕртен чарăнса лартăм. Мĕн амакĕ пулчĕ Кольăна? Ăнланаймарăм. Нимех те ытлашши каламарăм-çке. Эпĕ тусăм хыççăн урама тухса чупрăм. Унталла пăхатăп, кунталла — ниçта та курăнмасть. Хама такам çурăмран тĕкнипе хăвăрт хыçалалла çаврăнтăм. Коля пуль тенĕччĕ. Анчах ман хыçра кӳршĕри Çемен тетесен вăрăм сухаллă, пысăк мăйракаллă усал качаки тăра парать. Пĕтĕм яла хăратать вăл. Хăй мана пĕчĕк куçĕсене хĕстерсе сăнать. Эпĕ ни тарма, ни кăшкăрма пĕлеймерĕм: хăранипе пĕр вырăнтах чĕтресе тăратăп. Пуçра çеç хăрушă шухăш çиçĕм пек мĕлтлетсе иртрĕ: «Пĕтрĕм!» Анчах качака мана тĕкĕнмерĕ. Темшĕн, мана айăпланăн, пуçне каллĕ-маллĕ сулкаларĕ те пăрăнса утрĕ. Тинех хам мĕн тери лайăх мар ĕç тунине çеç туйрăм. Пĕрре хăрани иртсе кайманнипе, тепре хамăн айăпа туйса илнипе кăшкăрса макăрса ятăм. Тусăма кӳрентернĕшĕн чăтмалла мар намăс пулчĕ мана. Ун пек нихçан та урăх тумастăп тесе, хама хам тупа турăм. Ахальтен каламан иккен ваттисем: çиччĕ виç те пĕрре кас.

## Ҫăкăр-тăвар хире-хирĕҫ

### Калав

Ваттисен сăмахĕсене чылай илткеленĕ-ха эпĕ, анчах пĕри яланлăхах асăмра юлчĕ. «Ҫăкăр-тăвар хире-хирĕҫ» тенине те пĕчĕк чухнех илтнĕччĕ, унăн пĕлтерĕшĕ мĕн тери хăватлă пулнине ун чухне чухласа илеймен вара. Шухăшлаттăм: «Ҫăкăрпа тăвар мĕнле хире-хирĕҫ пулма пултарччăр? Вĕсем чĕрчунсем мар-ҫке, ҫӳреймеҫҫĕ. Е тата «Кивҫен ҫăкăр илсен ăна каялла тавăрса памалла ĕнтĕ»,— тесе ăнланаттăм. Ку чăнах та ҫапла пулас? Е сана кам та пулсан ҫăкăр-тăварпа чысласан — мĕнле чун савăнать, хĕпĕртет, хăвна хисепленине кура. Парăмра туятăн хăвна пĕрех май. Ытах та хăйне те ҫăкăр-тăварпа чыслама тӳр килсен, кăмăл тулсах каять те тем ҫăмăллăн туйăнать.

Ӳссе пысăкланнă май, ман ҫак шухăшсем те ӳссе ҫирĕпленсе пычĕҫ.

Пĕррехинче ҫурхи ăшă каҫ савнă каччăпа тĕл пултăм хурăн патĕнче. Тем пекех ҫĕкленӳллĕ кăмăл-туйăм хамăн. Пур савăнăҫăм ҫинчен каласа парассăм килет ҫумри чун савнине. Вăл кăштах ăшă сăмах каласанах — ҫавăнтах сăмах ҫине сăмах, юрласа та ярăттăм.

— Пĕлетĕн-и? — терĕ мана чун савни,— каҫхине эпир Ҫĕньялти Культура ҫуртĕнче пултăмăр, сарă хĕрсем куртăмăр... Шур акăш пек ташлаҫҫĕ, сар кайăк пек юрлаҫҫĕ. Пĕри мана килĕшрĕ...

— Ҫапла пулмасăр,— терĕм эпĕ хам сисмесĕрех,— анчах чĕрене тем вĕтелесе илчĕ. Эпĕ урăх ним калаймарăм. «Ҫăкăр пулчĕ-ши ку, тăвар-ши?» Чылайччен шухăшласа ҫӳрерĕм. Ҫичĕ хут виҫрĕм, касса пăхма шутларăм.

Тепĕр каҫхине эпĕ савнине:

— Эх, ҫав Мăньял каччисем, чăн та маттурсем. Хăва хулли пĕвĕсем, пурте хăйсем паттăрсем. Пĕри мана куҫ хĕсрĕ, темĕн каласшăн пулчĕ,— терĕм.

Куратăп: манăн савнин сăнĕ улшăнса пырать. Ним калама пĕлмест, те чĕлхи ҫĕтрĕ? Шухăшлатăп: «Ҫăкăр-тăвар саплашрĕ». Ахальтен мар ҫав ваттисем калаҫҫĕ: «Калаҫа пĕлмен чĕлхе — ҫăвара вут хыпать», тесе.

## Чĕрепе калаçни

Ыра тĕлĕк курса çыварнă вăхăтра сасартăк, такам мана тĕкнĕ пек туйăннипе, вăранса кайрăм. Пӳлĕмре çурма тĕттĕм. Кантăкран карăнса пăхакан пысăк куçлă сар уйăх, эпĕ вăраннине асăрхаса, çуталса-çуталса илчĕ, мана чеен, теме систерсе, куçне хĕсрĕ. Эпĕ, хама хам ĕненмесĕр, куççене аллăмпа сăтăркаларăм, унтан тутлăн карăнтăм та, тепĕр хут çыварса каяс шутпа утияла пуç çиййĕнченех витрĕм, сĕм тĕттĕмлĕх ытамне кĕрсе ӳкрĕм. Çак самантра такам тăк-тăк! тăк-тăк! шакканине илтрĕм. Сасă кĕтмен çĕртен пулнипе, тĕлĕнсе хытса кайрăм. Сасса тимлесе тăнларăм, вăл ăçтан илтĕннине пĕлме тăрăшрăм. Тăк-тăк! тăк-тăк! такам тăрăшсах шаккать те шаккать, каçа пăхмасăр, канăçа пĕлмесĕр ĕçлет те ĕçлет. Такама ĕçлеме чăрмантарасран, хыттăн сывлама чарăнтăм, шăпшăпăрт выртатăп. Тăк-тăк! тăк-тăк! тăк-тăк! илтĕнет юнашарах сасă. Ăсăмпа тавçăрса иличчен, çак сасă манран, ман ăшăмран тухнине туйăмпа ăнланса илтĕм.

Манри пĕр пĕчĕк чăмакка, пĕчĕк чĕрем кунне-çĕрне пĕлмесĕр, пĕчĕк двигатель пек, ывăнмасăр ĕçлет те ĕçлет, тапать те тапать. Хурланатăп-и, йĕретĕп-и, савăнатăп-и, кулатăп-и, вăл çавах ырми-канми хăйĕн тивĕçне тăвать: мана пурнăç парнелет.

Тавах сана, чĕрем, эс çавăн пек ӳркенмесĕр ĕçлеме пултарнишĕн, мана кунран-кун кун çути кăтартнишĕн. Пĕр эпĕ çеç сана, чĕрем, хĕрхенме пĕлместĕп. Вăхăт вăхăтпа халран кайиччен ĕçлеттеретĕп. Эс вара, мăнтарăн, чăтатăн. Мĕн тăвас тейĕн, шăпу çанла санăн, чĕрем! Ытла та канăçсăр çын сан хуçу. Пур çĕре те çитме, вăй çитнĕ таран пурне те пулăшма, кашнине ыр сăмахпа йăпатма, тĕрĕсмарлăха тăрă шыв çине кăларма тăрăшать. Ан çиллен мана, чĕрем, эпĕ урăхла пурăнма пултараймастăп. Çак çылăхлă çĕр çине пурăнмаллипех пурăнма çуралтăм пулсан, епле-ха хам хыççăн çĕр пичĕ çинче пĕр пĕчĕк йĕр те пулин хăвармасăр çак çут тĕнчепе уйрăлас? Тен, ман ыра сăмах кама та пулсан хавхалантарса, çĕнĕ, пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçсем тума, кама та пулсан йăнăш утăм тума, йывăрлăхра пулăшĕ. Пĕр çакăншăн çеç эпĕ

сапа, чĕрем, хăвăртрах та хăвăртрах ĕçлеттерме хатĕр...

Тăк-тăк! тăк-тăк! тăк-тăк! тапать чĕрем. Хуллен-хуллен сăпка юррине кĕвĕлет. Аннен çепĕç сассине илтетĕп эпĕ çав кĕвĕре, ачалăх тĕнчинче путатăп. Çав кĕвĕ çемми пĕрлешсе, сисмесĕрех тутлă-тутлă ыйха путатăп...

Чĕрем вара çаплах, канăçа пĕлмесĕр, ыйхă мĕнне чухламасăр, шаккать те шаккать: тăк-тăк! тăк-тăк! тăк-тăк...

## Каçхи тĕлпулу

### Юмах

Пӳрт стени çинче асатте хăй аллипе чĕнтĕрленĕ сехет çакăнса тăрать. Акă унăн çӳлти пĕчĕк алăкĕ уçăлчĕ те тĕрлĕ тĕслĕ сăрăпа илемлетнĕ куккук тухса тăчĕ, вуникĕ хутчен, мана сывлăх суннăн, ку-ку! ку-кук! тесе пуçне сĕлтрĕ, унтан — тарса пытанчĕ. Пӳлĕмри шăплăхра тăк-тăк! тăк-тăк! тăвакан, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлекен сехет сасси кăна илтĕнчĕ. Авăкран шап-шурă кăмака хыçĕнче тĕлĕрекен шăрчăк, эсĕ пĕччен мар текелесе, сассине пачĕ. Вăл та куккук евĕрех авăтни тунсăхлă чунăма татах пусăрăнтарчĕ.

Вăхăт шăвать те шăвать... Çеккунтсен, минутсен юхăмĕнче пурнăç сиссе юличчен путса çухалать. Тин кăна эпĕ ăна ӳтпе, чĕремпе туйса тăраттăм. Акă вăл вăхăт авăрне чăмрĕ. Шыраса туп ĕнтĕ халь ăна. Çапла пĕр сисĕнмесĕр иртет кунçулăмăр, çухалать пурнăç саманчĕ...

...Çурçĕр те çитрĕ ĕнтĕ. Анчах паян темшĕн-çке пачах ыйхă килмест. Хамăн пурнăçра темле тĕлĕнтермĕш пуласса темиçе кун чăтăмсăррăн кĕтетĕп. Теме сисет чун? Тĕл-тĕл пăрланса ларнă кантăкран каçхи урама тинкерсе пăхатăп. Пĕр çын та курăнмасть унта. Çил ачисем кăна вăй выляççĕ. Вĕре-вĕре юр пĕрчисене çӳлелле ывăта-ывăта яраççĕ, унтан çĕр çумне пусăрăнтараççĕ те пĕр вырăнтан тепĕр вырăна хаваслăн хăвалаççĕ. Вăй выляса алхасса кайнăскерсем, хунара та канлĕх памаççĕ, чуччу ярăнтарса, ярăм çутта тавраналла саптараççĕ.

Пуҫра тем тӗрлӗ шухӑш явӑнать. Ача чухнехи те аса килет, пуласлӑхӑн ҫул кукринчи кӗтменлӗхсем те, ҫунат хӳштарса, пӗр илӗртеҫҫӗ, тепӗр, чуна пӑшӑрхантарса, хӑратаҫҫӗ. Чӑпар ут евӗр ӗмӗт ҫуралать... чун еккипе чуптарать.

Тӗттӗм кӑвак тӳпери пӗлӗт хушӑкӗсенчен инҫет ҫӑлтӑрсем мӗлтлететҫҫӗ. Тен, таҫта, тӗнче уҫлӑхӗнче, пӗр-пӗр планета ҫинче ман пекех пӗр пӗчӗк хӗрача кантӑк умӗнче тӑрать пулӗ? Ҫут тӗнче, ӗмӗт пекех, вӗҫӗ-хӗррисӗр, тем те пулма пултарать...

Сасартӑк тем пулчӗ, пӗтӗм ӳт-пӳпе вӗттӗн-вӗттӗн ҫӳҫенсе, чӗтренсе илтӗм. Кантӑк витӗр ман ҫине пысӑк хура куҫсем тинкерсе пӑхнине курах кайрӑм. Хӑранипе куҫ хупанкисене хупса хыттӑн пӑчӑртаса лартрӑм. Тӑпӑртӑпӑр чуптарса илсе кайрӗ чӑпар ут евӗр шухӑш-ӗмӗт. Мӗн амакӗ ку? Курӑнчӗ пуль? Чӑтаймарӑм, куҫа уҫрӑм. Питӗ-питӗ ҫывӑхра пиҫсе ҫитнӗ ҫӗмӗрт евӗрлӗ куҫ, питӗ тинкерсе, питӗ йӑлӑнса пӑхать ман ҫине. Кӑкӑртан сиксе тухас пек тапакан чӗрене пусӑрӑнтарса, чӳречене яриех уҫса ятӑм. Пӳлӗме ҫан-ҫурӑма уҫӑлтарса сивӗ сывлӑш пӑсланса кӗчӗ. Хӑлхара темле ҫепӗҫ сасӑ янӑрама пуҫларӗ, инҫет ҫӑлтӑр ҫути ҫывхарса-ҫывхарса килчӗ те тӗрлӗ тӗслӗн ялтӑраса ҫунма тытӑнчӗ. Паллӑ мар ҫутӑ чӑмӑркка чӳрече янахӗ урлӑ вӗҫсе каҫрӗ те янкӑр уйӑх пайӑркисенчен тӗртсе ҫӗленӗ, ҫӑлтӑрсемпе тӗрленӗ вӑрӑм кӗпе тӑхӑннӑ хӗр пулса тӑчӗ. «Ку — Каҫ пике-ҫке»,—тавҫӑрса илтӗм эпӗ.

Хӗр пӑхса тӑранайми илемлӗ сӑн-питлӗ, ӳт-пӗвӗ яштака. Хуп-хура кӑтра ҫӳҫӗ хулпуҫҫи ҫийӗн сапаланса кайнӑ. Тӗл-тӗл куҫа йӑмӑхтаракан мерчен юр пӗрчи евӗр ялтӑрать. Пуҫ ҫинче кометӑсенчен хитрелетсе чӗнтӗрленӗ пӗчӗк ылтӑн корона. Хӗр куҫӗнче чӗрене ҫуракан салхулӑхпа ырату, чуна капланса килнӗ никама каласа парайми тунсӑх...

Чӳречене хупрӑм та каҫхи хӑнана тӗпелерех иртме сӗнтӗм. Хам вара ҫемҫе кресло ҫине вырнаҫса лартӑм. Пике ман ура вӗҫне, кавир ҫине чупса-вӗҫсе пычӗ, калаҫма пуҫларӗ. Ӑнланаймарӑм унӑн чӗвӗл-чӗвӗл чӗлхине. Ҫук, темле тӑрӑшсан та ӑнланаймарӑм. Сӑмах хушса та

пулин йăпатасшăнччĕ хĕр-пикене, ăна та пултараймарăм. Каçхи хăна пуçне пĕкрĕ, хулпуççийĕсем вĕттĕн-вĕттĕн чĕтреме пуçларĕç. Питне ывăçа илтĕм те тарăн кӳлĕ евĕр куçĕнчен тинкерсе-тинкерсе пăхрăм. Мĕн чухлĕ куççуль вĕсенче. Ахах евĕр тумламсем, йĕмесĕр чăтса тем чухлĕ пухăннăскерсем, пит-çăмарти тăрăх юхса анса алă çине патлатса ӳкеççĕ те ӳте кăвар евĕр пĕçерте-пĕçерте илеççĕ. Çепĕç сăмахсем пăшăлтатса каласа, пуçран ачашласа лăплантарма тăрăшрăм хĕре. Ерипен вăл йĕме чарăнчĕ. Пӳлĕмре шăп.

Тăк-тăк! Тăк-тăк! шаккать сехет, йĕпписем çаплипех пĕр вĕçĕмсĕр пĕр-пĕрне хăвалаççĕ. Хуллен шурăмпуç та çуталса килчĕ, кантăка кăвак тĕс çапрĕ. Хĕр-пике те тем аса илнĕн ура çине сиксе тăчĕ, ман çине юлашки хут пăхса илчĕ те чӳрече патне васкарĕ. Кăвак кантăк каллех çăлтăр евĕр çуталса илчĕ — сӳнчĕ. Чĕре, тем çухатнăн, ыратрĕ, çав çутă патне туртăнчĕ. Каллех темле кĕмĕл шăнкрав евĕр çепĕç сасă янраса кайрĕ. Шăнкăр-шăнкăр шыв юххи те, хурăнлăхри шăпчăк юрри те пур унта. Пуç хăех усăнчĕ, куç хупанкисем йăвăрланнăçемĕн йăвăрланчĕç. Эпĕ çывăрса кайрăм.

Тĕлĕкре тĕпсĕр кăн-кăвак тӳпере вĕçсе, сип-симĕс улăхра ӳсекен салтак тӳмми чечексем хушшинче чупса, вĕçĕ-хĕррисĕр ачаш тинĕсре ишсе çӳрерĕм. Ирпе телейлĕн вăранса, савăнăçлăн кулса ятăм. «Мĕн тери ырă та асамлă тĕлĕк курнă»,— шутларăм эпĕ.

Утияла сирсе ывăтса ятăм та кравать çинчен çемçе кавир çине вăшт! сикрĕм. Çав самантрах ура айĕнче çиçсе выртакан темле йăлтăрккана асăрхарăм. Чӳречерен кĕнĕ хĕллехи хĕвел çинче вăл тĕрлĕ тĕслĕн курăнать. Тӳрех каçхи тĕлпулу аса килчĕ.

Каçпикен пархатарлă та черчен чĕри юратупа тулнă пулнă. Чи таса та телейлĕ туйăмсемпе хĕмленнĕ вăл. Анчах телейпе юнашар асап та пур çав. Пике хăйĕн пурнăçне Шуçăм-каччăпа çыхăнтараймасть. Кашни кун пĕрпĕрин патне ăнтăлаççĕ вĕсем, анчах та тĕлпулăвĕсем ытла та кĕске. Пĕр самант — вара каллех пĕр талăк уйрăлу.

Пĕр вĕçĕмсĕр, ĕмĕр-ĕмĕр, çут тĕнче çуралнăранпах пĕрпĕрин патне васкаççĕ вĕсем. Тин ӳкнĕ сывлăм пĕрчи пек

тап-таса вӗсен юратӑвӗ. Хӑйсене шеллемесӗр ҫӗр ҫинче пурӑнакан ҫынсене хаваслӑхпа кулӑ, канлӗхпе телей, ҫепӗҫлӗхпе ачашлӑх парнелеҫҫӗ хӗмленсе ҫунакан чӗресем. Ҫынсен телейӗнче хӑйсен телейне шыраҫҫӗ...

## ТУПМАЛЛИ

1. Илсе кай мана тӗнче хӗрне . . . . 1
2. Вӑхӑт тумламӗ . . . . . . . . 46
3. Ҫурта ташши . . . . . . . . 68

ЛЮБИМОВА АЛЬБИНА ВАСИЛЬЕВНА

**ПРОЩАЙ, БУДЬ СЧАСТЛИВ...**

(Стихи, рассказы, сказка)

На чувашском языке

Редактор **В. Г. Кириллов**
Худ. редактор **В. М. Михайлов**
Художник **В. М. Штранкин**
Корректор **Л. Г. Чермакова**

Сдано в набор 31.07.1992 г. Подписано к печати 8.12.92. Формат $70\times100^{1}/_{32}$. Объем 4,0 уч. изд. лист. Заказ № 1489. Тираж 1500. Цена по подписке 50 коп., в рознице — договорная. Типография № 1 Государственного комитета Чувашской Республики по печати и информации. 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

30 =